Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУН 16 КĔÇНЕРНИКУН 136 (4949) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ.* Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин IV-мĕш конференцийĕ

ПСК(б)П Шупашкар хула комитет ĕçĕсем çинчен Г. И. Иванов йулташ доклачĕ тăрăх йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ПСК(б)П Шупашкар хула комитет ĕçĕсем çинчен отчотлă доклад илтесе сутсе-явнă хыççăн, ПСК(б)П Шупашкар организацин IV-мĕш конференцийĕ ПСК(б)П хула комитечĕн практикăлă ĕçĕсене ситеслĕклĕ, политикăлă çул-йĕрне тĕрĕс тесе йышăнать.

Отчотлă тапхăр хушшинче пирĕн çĕршывăн политикăлă хусалăх ÿсĕмĕнче пысăк улшăнусем пулса иртнĕ. Тĕнчери чи демократилĕ Сталинла Конституци тăрăх ССРС Верховнăй Совечĕн суйлавне иртернĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсен политикăлă пысăк активлăхне, ПСК(б)П тавра пĕтĕçсе тăнине, хăйсен моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхне, ССРС Верховнăй Совет суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн вăйне кăтартрĕç.

Союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ тата тепĕр хут социалисăм çĕршывĕнчи ĕççыннисен большевиксен партийĕ тавра питĕ тачăн пĕтĕçсе тăнине, вĕсем Сталин йулташа, вĕсемсĕр йуратнине кăтартать. Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ тата унăн паттăр соратникĕсем Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ суйлама кидĕшÿ пани Чăваш АССР ĕççыннисен хушшинче калама çук пысăк политикăлă тата производствăлă çĕклену хускатса йачĕ.

Парти Тĕпкомĕн февраль-мартри Пленумĕн решенийĕсем тата Сталин йулташăн историлĕ кăтартăвĕсем тăрăх ĕçлесе, парти организаци çак иртнĕ отчотлă çулталăк хушшинче халăх тăшманĕсене—фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуазла-националисла шпионĕсене, сатăрçăсене, диверсантсене кăкласа пăрахас тата хамăр ретри идиотла чире—тимсĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕçсем туса иртернĕ. Халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкни пирĕн çĕршыва, пирĕн партине тата ытларах тĕреклĕ, хăватлă туса хучĕ.

Хула комитечĕн тăшманла кивĕ руководствине тăрă шыв çине кăларнă хыççăн, хула парторганизаци парти организацие халăх тăшманĕсенчен—фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуазла-националисла агентĕсенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртернĕ. Парторганизацине пирĕн чаплă наркомвнуделецĕсен сыхăлăхĕ тăшман йăвисене çĕмĕрсе тăкма пулăшрĕ. Çĕнĕ кадрсем кăларас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртернĕ, партири ĕçсем лайăхланнă, хула парторганизацийĕн кĕрешÿ пултарулăхĕ хăпарчĕ. Хула парторганизацине партин йĕртсе пыракан органĕсен суйлавĕ партилĕ политикăлă ĕçсене майăла тата ытларах вăйлатса йарас палăрта иртрĕ. Тĕп вырăнта—сыхăлăха вăйлатас, троцкисла-бухаринла кăшкăлăхпа кĕрешес ыйтусем, парти речĕсене ÿстерес, коммуниссене идейă йĕнĕпе хĕçпăшаллантарас, комсомол, сочувствуйущисем хушшинче ĕçлес, çĕнĕ кадрсем вĕрентсе ситентерсе пырас, тăшмансен сатăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес ыйтусем тăнă. Хула комитечĕ парторганизацине тăшмансенчен тасатас кĕрешÿ вăхăтĕнче йăнăшсем туман пулсан, çак ситменлĕхсем тата та пысăкрах пулмала пулнă. Хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕнчи практикăра коммуниссене партирен елеклĕ материалсем тăрăх кăларни пулнă. Хула комитечĕпе уйрăм пуçламĕш парторганизацисем маскăпа витĕнсе ларнă тăшмана, сыхăлăх çинчен кăшкăрашнипе парти ретĕнче сыхланса йулма тăрăшнă, репрессисен тунипе пирĕн большевикла кадрсене çĕмĕрсе тăкма, чăнчăкçăрлăх сарма, шиклену тума тăрăшнă тăшмана сийенчен чухласа илеймен. Хула комитет секретарĕ пулнă Смирнов елекçĕсемпе перестраховщиксене хирĕç кĕрешмен çеç мар, вăл хăйне мĕнле те пулса тасарах тăратса кăтарма, çапла вара, хăй иртнĕ вăхăтсенче буржуаллă националистсене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе нимĕн те туманнине, тата вĕсемпе килĕшсе ĕçленине пытарса хăварма тăрăшнă. Смирнов партири демократине сĕмсĕрле пăснă, коммуниссен кунçулĕ çинчен тăракан ыйтăва хăй тĕллĕн татса панă.

Конференци ПСК(б)П хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисене парти Тĕпкомĕн февраль-мартри тата йанварти Пленумĕсен решенийĕсем тăрăх тата Сталин йулташ халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкасси, вĕсене пĕтересси çинчен, политикăлă тимсĕрлĕхе пĕтересси çинчен, капиталисăм тĕнчи хупăрласа тăнипе маймала марри çинчен кăтартса панисем тăрăх ĕçлесе, маскăпа витĕнсе йулнă халăх тăшманĕсемпе вĕсене пулăшакансене кăкласа ывăтас кĕрешĕве малашне те вăйлатса пыма хушать; çакăн пек тăвас пулать: „Нимĕнле аисăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивчĕр тесе, хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала" (Сталин).

Конференци хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисене ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ кăтартса панă йăнăшсене кĕске вăхăтра пĕтĕмпех тÿрлетсе ситерме, парти членĕсен кунçулĕ çине чăтма çук çăмăлтайла пăхнине пĕтерме хушать.

ПСК(б)П хула комитечĕ тăшманла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе, уйрăмах промышленнăçра, коммунальнăй çурт-йĕр строительствинче, суту-илÿре, хула хуçалăхĕнче тăшманла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе ситеслĕксĕр ĕçленине палăртса, парти конференцийĕ хула комитетне социалисăм строительствин пур участокĕсенче те тăшманла ĕçсен йулашкисене кĕске вăхăтра пĕтерме хушать. Хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕнче политикăпа хуçалăх ĕçĕсене пĕр пĕрипе тĕрĕс çыхăнтарса пани тăрăх, предприйатисенче, ертелсенче, çĕнĕ стройкăсенче стахановла йухăмпа социалисăмла ăмăртăва йертсе пымала, производствăлă канашлусен ĕçĕсене, рационализаципе изобретени ĕçне, рабочисем хушшинчи техникăла вĕренÿве лайăхлатмала, брак тунипе, ĕç дисциплинине пăснипе кĕрешмеле, предприйатисем, ертелсем производствă программисене, промышленнăç, коммунальнăй çурт-йĕр строительстви планĕсене срукчен ытлашшипех тултармала тăвас пулать. Çĕнĕ савăтсем лартас ĕçе тата Канаш—Шупашкар чукунçулне туса пĕтерес ĕçе уйрăмах пысăк вырăна хурса, конференци хула комитетне çĕнĕ стройкăсенчи парторганизацисене кирлĕ пек практикăлă пулăшу пама, çак ĕçсене вăхăтра пĕтермеле тума хушать.

Конференци ПСК(б)П хула комитетне парти организацисемпе хулари ĕççыннисене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене ССРС Верховнăй Совечĕн суйлавĕнчен те лайăхрах, организацилĕрех ирттермеле тăвас ĕçе мобилизацилеме хушать.

Конференци ПСК(б)П хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисене Обкомпа хула комитечĕн кивĕ руководствинче пулнă партине тивĕçлĕ мар меслетсене (йăпăлтатни, çулнуçлăх, самокритикăна хĕсни, партин демократине пăсни) татăклăн пĕтерсе пыма хушать, коммуниссене большевикла критикăна самокритикăна хăнăхтарса пымала, парти пурнăçĕнче демократилĕ централизăмăн никĕсне вĕçне çити пурнăçа кĕртсе пымала.

Хула парторганизаци, Сталин йулташ большевисăмпа хĕçпăшалланасси çинчен кăтартса панă лозунга пурнăçа кĕртсе, партилĕ пропагандăлă ĕçе чылайах лайăхлатрĕ. Çапах та ку ĕçре пысăк çитменлĕхсемех пур-ха. Чылай коммуниссене парти вĕрентĕвне хутшăнтарман (Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ, Канаш—Шупашкар чукунçул строительстви, çĕнĕ стройкăсем), хăшпĕр парторганизацисенче кружоксене начар çÿрессĕ (Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ, Промсойуз, Çĕр-ĕç Халăх Комиссариачĕ), пропсеминарсем пропагандиссене кирлине пама пултараймаççĕ.

Чăваш парторганизацин руководствинче ларнă халăх тăшманĕсем парти вĕренĕвĕнчи ĕçе, уйрăмах ПСК(б)П историне вĕренес ĕçе пĕтерсе пынă. Хăшпĕр пуçламĕш парторганизаци руководителĕсем çак фактран халĕ те кирлĕ вывăдсем тăваймаи, çак сатăрлăхан йулашкисене тата уйрăм коммуниссем хăйсен идейăлă-политикăлă пĕлĕвне хăпартасси çине нимĕн шутламасăр пăхнине пĕтерме кирлĕ ĕçсене туман.

Хула парторганизацинче çак иртнĕ отчотлă тапхăр хушшинче ПСК(б)П историне вĕренес ĕç чылайах лайăхланнă пулсан та, хулари нумай пуçламĕш организацисен ĕçĕнче парти вĕренĕвĕ каллех йулнă участок пулса тăрать.

IV-мĕш партконференци хула комитетне çак ситменлĕхсене пĕтерме, пропагандă ĕçне чылайах лайăхлатма, пропагандиссен семинарне, парткабинетра консультаципе справкă ĕçне организацилесе лайăхлатма хушать. ПСК(б)П хула комитетне—ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ умне хула комитечĕ çумĕнче агитаципе пропагандă пайĕ организацилесси çинчен тата хулара пропагандиссен штатне ÿстересси çинчен ыйту лартма хушас.

ССРС Верховнăй Совет суйлавĕ вăхăтĕнче ĕççыннисем хушшинче чылай пысăк агитацилĕ-массăлă ĕçсем туса иртернине палăртса (1000 агитатăра йахăн ĕçленĕ). конференци ПСК(б)П хула комитетне хăйĕн малашнехи практикăлă ĕçĕнче агитколлективсемпе агитатăрсене йертсе пырассине тĕпренех лайăхлатма, пуçламĕш парторганизацисенче агитаци ĕçне лайăхлатас йĕнĕпе куллен кун конкретлă пулăшу парса пыма, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе теорилĕ ыйтусем тăрăх докладсем иртерме хушать,—çак ĕçре пур суйлавçăсене те большевикла агитаципе çавăрса илесси тĕп задач пулмала.

Конференци ПСК(б)П хула комитетне партком секретарĕсемпе парторгсен семинарне организацилеме, парти пухăвĕсем иртерес ĕçре парторгсене конкретлă пулăшу пама ĕç планĕ тăвасси т. ыт. те, хулари коммуниссен пĕрлехи пухăвĕсемпе актив пухăвĕсене тăтăшах иртерме хушать.

ПСК(б)П хула комитечĕн хула совет ĕçне татăклăн çĕнетмеле, секцисен ĕçĕсене лайăхлатмала, суйлавçăсен наказĕсемпе сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртнине уйрăмах—хула хушшине лайăхлатас, сывлăх учрежденисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе панă наказсемпе сĕнÿсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемеле, хула совечĕсен пайĕсене кадрсем парса тĕреклетмеле (коммунальнăй хуçалăх пайĕ, сывлăх пайĕ т. ыт. те), хула советĕнче ĕçлекен коммунис-депутатсен вырăнне хăпартмала. Хула совечĕ обйазателнăй постановленисем кăларнă чухне революцилĕ саккунлăха пăснисем пулнине, социалисăмла пурлăха çаратакансемпе ситеслĕклĕн кĕрешменнине палăртса, конференци хула комитетне социалисăмла пурлăха сыхласси çине хытăрах пăхмала тума (растратăсемпе çаратусемпе кĕрешесси), Сталинла Конституцине пăснисене хирĕç кĕрешĕве вăйлатмала, революцилĕ саккунлăха çирĕппĕн тытса пымала тума хушать.

Хулара профсойуз организацисем 50 ытларах. Хула комитечĕ вĕсемпе тÿррĕмĕн сыхăнса тăрасси пулманпа пĕрех, вĕсене парти йĕнчен йертсе пырасси пуçĕпех ситеслĕксĕр пулнă. Конференци хула комитетне çаксене тума хушать:

а) Профсойуз ĕçĕсене лайăхлатас йĕнĕпе конкретлă ĕçсем тумала, профсойузсем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне иртерес тĕлĕшпе парторганизаци умĕнче тăракан задачăсене туса пырас ĕçре кайа йулнине пĕтермеле.

б) Профсойуз членĕсене политикăлă воспитани парас ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе йамала.

в) Профсойуз руководителĕсен сойуз членĕсене культурлă канмала тăвас ĕçе организацилесси çине ытларах пăхмала, физкультурă йухăмне анлăн сарса йамала. ПСК(б)П хула комитечĕн тивĕçлĕ организацисенче выранти кану çурчĕ тăвасси çинчен ыйту лартмала.

Конференци хула комитетне пирĕн „парти килĕнче" большевикла йĕрке тăвасси çинчен ПСК(б)П Тĕпкомĕ тата Сталин йулташ кăтартса панисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртессишĕн татăклăн кĕрешме хушать, уйрăмах—парти членĕсемпе кандидачĕсене учота тĕрĕс илес ĕçе йĕркелесси çине, парти членĕсемпе кандидачĕсем йĕнчен парти билечĕсемпе докуменчĕсене тĕплĕн сыхламала тăвасси çине, парти Тĕпкомĕ ПСК(б) Парти членĕсемпе кандидачĕсем пĕр организациран тепĕр организацине куçас йĕрке çинчен йышăннă решенине çирĕппĕн пурнăçа кĕртесси çине пăхмала.

Хула парторганизацин ÿсĕмĕ ситеслĕксĕр пынине, уйрăмах—рабочисен шучĕпе ситеслĕксĕр ÿснине палăртса, парти конференцийĕ ПСК(б)П хула комитетне çак ĕçе татăклăн лайăхлатма хушать; уйрăмах—партине çĕнĕрен илме пуçланăранпа партине пĕр çын та илмен пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсене тĕрĕслесе тухмала, производствăлă пуçламĕш парторганизацисене çĕнĕ членсем илес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе пулăшмала.

Конференци хула комитетне, уйрăмах, шкулсенче преподавани ĕçĕн пахалăхне лайăхлатасси çине, шкулсене учебниксемпе учебнăй пособисем таратас ĕç çине хытăрах пăхма хушать, преподавателсемпе учителсем хушшинче политикăлă ĕçе вăйлатмала. Шупашкарта тăвакан çĕнĕ шкула уйрăм контроле илмеле, ăна вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕ тĕлне туса пĕтермеле.

Конференци хула комитет ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх тесе çакна шутлать: нумай пуçламĕш парторганизацисенче сочувствуйущисен ушкăнĕсем çук, пур пек ушкăнсенче сочувствуйущисен йышĕ сахал, сочувствуйущисене идейăла воспитани парас ĕç питех те начар.

Конференци хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисене сочувствуйущисен ушкăнĕсем организацилес ĕçе вăйлатма хушать, вăл ушкăнсене партире тăман активиссем хушшинчен партине сыхăх тăракан лайăх çынсене илмеле, сочувствуйущисен ушкăнĕсене тĕреклетмеле, сочувствуйущисене практикăлă ĕçе тата вĕренĕве активлăн хутшăнтармала, вĕсене большевикла воспитани памала.

Конференци хула комитечĕпе пуçламĕш организацисене вĕсем партине çĕнĕрен илнисем хушшинче начар ĕçлени çине кăтартса парать, парти организацисен партине çĕнĕрен илнĕ йулташсене большевисăмпа хĕçпăшаллантармала тăвас ĕçе пур майсемпе те лайăхлатмала.

ПСК(б)П хула комитечĕ хулари комсомол организацине ситеслĕксĕр йертсе пынă. Конференци ПСК(б)П хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисене—çамрăксене коммунисла воспитани парас йĕнĕпе комсомол организацисене конкретлă пулăшас ĕçе вăйлатма хушать.

Уйрăмах пионерсемпе вĕренекен ачасем хушшинче воспитани ĕçне вăйлатасси çине пăхмала, вĕсен кану вăхăтне тĕрĕс организацилемеле (лагерсем, ача площадкисем, концертсем, ача вăййисем, физкультура).

ПСК(б)П хула комитетне ПСК(б)П Обком бÿровĕ суту-илÿпе общĕствăлă питани ĕçĕнчи сатăрла ĕçсен йулашкисене пĕтересси çинчен йышăннă решенине пурнăçлама пĕтĕм парторганизацине мобилизацилеме хушас. Кунта уйрăмах суту-илÿ организацисенче партилĕ-политикăлă ĕçе лайăхлатасси çине пăхмала.

Конференци çакна палла тăвать: халĕ пĕтĕм пысăкăшĕпе тăракан задач вăл—парти, совет, хуçалăх руководствине пынă çĕнĕ кадрсене идейăпа политика йĕнчен воспитани парасси пулать. ПСК(б)П хула комитечĕн çамрăк работниксене ăшă кăмăлпа, тимлĕхпе пăхмала, вĕсене большевисăмпа хĕçпăшалланма, хăйсен квалификацине хăпартма пулăшмала.

ПСК(б)П хула комитечĕн пуçламĕш парторганизацисене вырăнсене тухса оперативлă йертсе пырассине лайăхлатмала, уйрăмахах—инструктăрсемпе ĕçлессине организацилемеле. Конференци ПСК(б)П хула комитетне хула комитечĕн штатра тăман инструктăрсен хисепне йышлăлатма, çак ĕçе хулари парти активне хутшăнтарма, пуçламăш парторганизацисене пулăшас ĕçе—ПСК(б)П хула комитет членĕсене хутшăнтарма хушать.

СВБ организацисен ĕçĕсем пăртакках хускалма пуçланнине, хулара тĕне хирĕç пропагандă ĕçĕ лайăхланма пуçланнине палăртса, конференци ПСК(б)П хула комитетне тĕне хирĕç пропагандă ыйтăвĕсем çине тата ытларах пăхма, уйрăмăнах—ĕненекен ĕççыннисем хушшинче тĕне хирĕç ĕçе вăйлатса пыма хушать.

Стена хаçачĕсенче чылай пысăк çитменлĕхсем пур. Конференци стена хаçачĕсене парти йĕнчен йертсе пырассине вăйлатма, çак ĕçе коммуниссене активлăн хутшăнтарма, стена хаçачĕсене тĕрĕсленнĕ большевикла кадрсемпе тĕреклетме, стена хаçат страницисенче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав ыйтăвĕсене анлăн сутатса пымала тума хушать.

Хулари ĕççыннисен политикăлă тата культурăлă ÿсĕмне хисепе илсе, ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ умне хулара хаçат организацилесси çинчен ыйту тăратмала.

Конференци ПСК(б)П хула комитечĕ общĕствăлă-ирĕклĕ организацине ситеслĕксĕр йертсе пынă тесе шутлать. Çавăнпа та ПСК(б)П хула комитетне çаксене тума хушать:

Хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисенчен общĕствăлă-ирĕклĕ организацисене: СВБ, МОПР т. ыт. те йертсе пырассине вăйлатмала, вĕсене хатĕрленнĕ кадрсем парса тĕреклетмеле. Осоавиахим организацисене йертсе пырас ĕçе уйрăм хисепе илмеле, агитацилĕ ĕçе практикăлă массăлă-оборонă ĕçĕпе çыхăнтармала, çак ĕçре Осоавиахимăн пысăк массисене политикăлă оборонă воспитани парассине малти вырăна хумала.

Грузи халăхĕ чĕре тулли кăмăлпа хĕпĕртет

Тбилисири ĕççыннисен 250 пинлĕ демонстрацийĕ

ТБИЛИСИ, ийунĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). Совет Грузин хулисемпе йалĕсенчи ĕççыннисем Грузи СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсен чаплă итогĕ çинчен пĕлтернине калама çук пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ.

Тбилиси ĕççыннисен савăнăçĕ калама çук пысăк.

Кунта, орденлă Грузин столицинче, Грузи СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçĕ тата учителĕ Сталин йулташ, унăн шанчăклă соратникĕ Молотов йулташ баллотировкăна тăнă.

Тбилиси хулинчи предприйатисенче, учрежденисенче тата аслă шкулсенче халăх мĕн иртенпех калама çук чĕррĕн хусканнă, ĕç пĕтнĕ хыççăн халăх савăнăçĕн хаватлă хумĕ тапранса кайнă.

Прожектăрсем çутатнă Кавказ лешйĕн федерацийĕ площечĕпе демонстрацине 250 пин çын пухăннă.

Аслă Сталина чысласа, саламласа кăшкăрнисем ретрен рете, колоннăран колоннăна йанăраса кайаççĕ, овацисем хăватлăн кĕрлеççĕ, Сталин йатне йурăсенче йурлаççĕ, лозунгсемпе йалавсем çине çырнă, унăн йатне кашни асăнать, кашниех Сталин йатне хăйĕн чĕринче тытса тăрать.

Демонстрацире пулнисем Верховнăй Совета хăйсем шанса суйланă депутатсене, трибунă çинче тăракансене, хĕрÿлĕн саламлаççĕ.

Трибунă çинчен хĕрÿлĕ сăмахсем йанăраççĕ.

Демонстрацие тухнă халăх хорсем „Сталин çинчен хывнă йурăна" йурлама тытăнать. Вăл йурăн хаваслă йанăравĕ хула çинче кĕрлесе тăрать. Нихăçан манми, тарăнăн хумхантаракан минутсем, вĕсем çак пысăкран та пысăк халăх уйавĕнче пулнă мĕн пур халăхăн пуçĕнчен нихăçан та тухмĕç.

Хаваслă демонстрацисем çавăн пекех тата Батумире, Сусумире, Кутаисире, Портире, Горире, Махарадзере, республикăн мĕн пур районĕсенче пулса иртнĕ.

Грузи халăхĕ коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла хăватлă блокĕн чаплă çĕнтерÿне уйавласа иртернĕ.

Аджари тата Абхази АСС Республикĕсен Верховнăй Совет суйлавĕсен итогĕсем

Аджари АССР Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсенче саса правипе усă куракан 107.662 çынран, 107.072 çын сасăланă, вăл 99,5 процент пулать.

Аджари АСС Республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçленĕ суйлав округĕсенче пуринче те коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн 106.494 çын сасăланă, вăл сасăланă çĕре хутшăннисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,5 процент пулать.

* * *

Абхази АСС Республике тăрăх 156.496 суйлавçăран сасăланă çĕре 156.060 çын йе 99,7 процент хутшăннă. Абхази АСС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсенче пуринче те коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн 154.161 çын сасăланă, вăл сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,4 процент пулать. (ТАСС).

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕ

Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсен итогĕсем

Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсем ийунĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Вăл суйлавсенче коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ чаплă çĕнтерÿ тунă, сасăланă суйлавçăсенчен 99,6 проценчĕ коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă.

Тĕнчери чи демократилĕ Сталинла Конституци тăрăх Грузири ĕççыннисем республикăри государствă влаçĕн чи аслă органне суйларĕç. Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне 237 депутат суйланă, вĕсем халăхăн тивĕçлĕ ывăлĕсем, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн малти ретре кĕрешсе пыракансем пулса тăраççĕ.

Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлав правипе усă куракан суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен —1.898.041 суйлавçăран— 1.883.698 суйлавçă сасăланă, вăл сасăлас правăпа усă куракан граждăнсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,2 процент пулать.

Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕнче пуринче те коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн 1.876.391 çын сасăланă, урăхла каласан, вăл сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,6 процент пулать.

Тбилиси хули тăрăх 296.770 суйлавçăран 296.510 çын сасăланă, вăл суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,9 процент пулать. Комуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн 294.881 çын сасăланă, йе сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,5 процент пулать.

Грузи халăхĕ унăн пĕрремĕш депутачĕ И. В. Сталин йулташ пулнишĕн савăнать. Грузи халăхĕ унăн депутачĕ аслă Сталинăн соратникĕ—Совет правительствин пуçлăхĕ В. М. Молотов пулнишĕн савăнать. Верховнăй Совета рабочисен, хресченсен, совет интеллигенцин чи лайăх представителĕсене суйланă. Вĕсем хушшинче: Грузи большевикĕсен руководителĕ Л. П. Берийа, Грузири чи ватă учонăйсенчен пĕри—Тбилиси государствă университетĕнчи профессăр Джавахишвили, пăравуссемпе вакунсем йусакан Сталин йачĕпе тăракан савăтри чи лайăх стахановец—Девсурашвили, СССР Сойузĕн халăх артисĕ Васадзе тата ыт. те.

(ТАСС).

ЧĂВАШ КОММУНИ



ФАДКЛĂ САФИУЛĂВИЧ САФИУЛЛИН — Шăнкăртам райĕçтăвкомĕн председателĕ — Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăнкăртам суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

ФЕОДОСИЙА ЙАКĂВЛЕВНА ÇМИРНОВĂ—Çĕнĕ Хăва йалсовет председателĕ, Йĕлчĕк районĕ — Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тайăпа суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

АНДРЕЙ ИВАНОВИЧ ИВАНОВ —Уйкас йалсовет председателĕ, Шăхасан районĕ—Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йамаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

ЙЕКАТЕРИНА АНТОНАВНА АНТОНАВĂ —Канашри вакунсем йусакан савăтри работницă - стахановкă — РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Канаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

ЗАРИФУЛЛА ГАЛИУЛЛĂВИЧ ГАЛИУЛЛИН—Токайĕвă йалсовет председателĕ, Шăнкăртам районĕ — Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Урмай суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

КОНСТАНТИН ТИМОФЕЙЕВИЧ НАЗАРĂВ—Канашри вакунсем йусакан савăтăн тимĕрç цехĕн начаљникĕ — Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Канаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

Васçилий Михайлăвич ШИШКИН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хутар суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Çĕмерле районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан тата „Молодая сила" колхоз членĕсем пурте пĕр шухăшлă мулса Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хутар суйлав округĕнчен ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контрољ Комиççин Чăваш республикĕнчи партколлеги çекретарне—Васçилий Михайлăвич Шишкин йулташа палăртрĕç.

Шишкин йулташ—рабочи ывăлĕ, хăй те рабочи пулнă, вăл Аслă Октăберччен мĕн ачаранпах савăт хуçисемпе кулаксен йăвăр пусмăрĕпе мăшкăлне тÿссе курнă. Вăл—ĕççыннисен чăн-чăн ывăлĕ, ĕççыннисен пурнăçне, вĕсен шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене тарăннăн пĕлет. Вăл халăх интересĕсемшĕн çине тăрса тимлĕн кĕрешекен çын.

Васçилий Михайлăвича Ленин—Сталин партийĕпе Ленинла комсомол пăхса ÿстернĕ, парти пулăшнипе çеç вăл телейлĕ пÿрнăç тупнă, вăл—пирĕн аслă коммунисла партине, тăван аслă Сталина вĕçĕмсĕр парăннă çын.

Шишкин йулташ 1903 çулта Йарослављ облăçĕнчи Буйск районĕнчи Дедково йалĕнче, рабочи çемйинче çуралнă. Ача чухне пурнăç йăвăр пулнипе вăл аран-аран пуçламĕш шкултан вĕренсе тухма пултарнă.

Васçилий Михайлăвич çамрăк чухнех унăн ашшĕ вилнĕ. Вăл 12 çула çитсен кĕтÿ пăхма кĕрĕшет. Хăма çуракан савăтра ĕçлет. Револљуци хыççăн 1925 çулччен вăл тĕрлĕрен вырăнсенче тимрĕç, стољар, плăтник, рамшчик пулса ĕçлет. Буйскри хăма çуракан 8-мĕш номĕрлĕ савăтра рабочи пулса ĕçленĕ вăхăтра вăл Ленинла комсомол ретне кĕрет.

1925—28 çулсенче Шишкин йулташ—Хĕрлĕ Çарта. Мускав округĕнчи политикăлла çар шкулĕнче ĕçленĕ, çав вăхăтрах тата вăл хăйĕн пĕлÿне ÿстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлет. Кунта вăл ПСК(б)П ретне кĕрет: 1926 çулта ПСК(б)П членĕн кандидатне, 1928 çулта — ПСК(б)П членне кĕрет. Хĕрлĕ Çартан таврăннă хыççăн вăл „Москвошвей" трестра ĕçлет, кунта та рабочисене вăљљи уçнă университетра вĕренсе, хăйĕн пĕлÿне малалла ÿстерсе пырать, çавăн чухнех план-економикă техникумĕнче вĕренет.

Комсомол тата бољшевикла парти ретĕнче тÿрĕ кăмăлпа, хастарлăн ĕçлесе, Шишкин йулташ Ленин—Сталин ĕçне, халăх ĕçне чунтан-чĕререн парăннине кăтартса пачĕ. ПСК(б)П Тĕпкомĕ ăна ĕçĕн ответлăран та ответлă участкисене йанă, В. М. Шишкин йулташ Сталинла Тĕпком заданийĕсене йаланах бољшевикла тимлĕхпе тата çине тăрса пурнăçа кĕртсе пынă. 1929—33 çулсенче вăл профсойуз йенĕпе йĕртсе пыракан ĕçре: малтан ĕçлевĕн Мускаври пайĕн типографинче, унтан—Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Советĕнче; çав вăхăтрах марксисăм-ленинисăм курсĕнче вĕренет, ПСК(б)П Тĕпкомĕн ответлă заданийĕсене пурнăçа кĕртет. Чи лайăх бољшевиксемпе пĕрле В. М. Шишкина 1933 çулта ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йала пысăк ĕçе—бољшевикла колхозсемшĕн, колхозниксен пуйан та кулљтурăлла пурнăçĕшĕн кĕрешме—МТС политпайне йарать. Çак тапхăртан пуçласа политпайсене парти райкомĕсемпе пĕрлештеричченех В. М. Шишкин йулташ Чернигăв облăçĕнчи Чернацки МТС политпайĕнче ĕçлет. 1935 çултан пуçласа 1938 çулхи март уйăхне çитиччен вăл йăвăç каскалакансен сойузĕн Тĕпкомĕнче аслă инструктăр тата организацилĕ пай пуçлăхĕн ĕçĕсене тăваканĕ пулса ĕçлет.

1938 çулти март уйăхĕнчен пуçласа В. М. Шишкин йулташ ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контрољ Комиççин Чăваш республикĕнчи партколлеги çекретарĕ пулса ĕçлет.

Кирек мĕнле лару-тăрура та тавçăрса илме пĕлни тата бољшевикла партин интересĕсене кирлĕ вывăдсем тума пĕлни, партин уйрăм членĕсем тата партире тăман ĕççыннисем пирки тăракан ыйтусене татса панă чухне тÿрĕ кăмăллă та тĕрĕс пулни, ĕççыннисем çине тимлĕн пăхни, партин тата халăхăн тăшманĕсемпе кĕрешнĕ çĕрте хĕрхенсĕ тăманни—Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă пирĕн кандидатăн—Васçилий Михайлăвич Шишкин йулташăн пахалăхĕсем çавăн пек ĕнтĕ.

Варвара Игнатйĕвнă ЖУРАВЉОВĂ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Пашйел суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Варвара Игнатйĕвнă Журављова йулташ 1918 çулта Шăмăршă районĕнчи Асанкасси йалĕнчи чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Варвара ашшĕ Игнати Журављов 1926 çулччченех хăйсен йатак çĕрне йалти пуйансене çурмала актарса пурăннă. 1930 çулччен килте нимĕнле выљăх та усраймаң. 1930 çулта кăна вĕсем тыха илнĕ.

Варвара Игнатйĕвнă Журављова килте пурнăç начар пулнипе, 1929 çулччченех çын патĕнче ача пăхса пурăннă. 1929 çулта вăл йалти пуçламĕш шкула вĕренме кĕнĕ. Шкулта тăрăшса вĕреннĕ. Ăна лайăх вĕренсе пынишĕн 1932 çулта 2-мĕш класра вĕренсен тÿрех 4-мĕш класа куçарнă. 1933 çулта пуçламĕш шкултан „отлично" вĕренсе тухнă. 1933 çултан 1935 çулччен туллимар вăтам шкулта вĕреннĕ. Вăл туллимар вăтам шкулта вĕреннĕ вăхăтра, 1934 çулта унăн, ашшĕ чирлесе вилнĕ. Туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухсан килти пурнăç начаррипе вăл малалла вĕренме кайайман.

1935 çулта колхоза кĕнĕ. Колхоза кĕрсен тин вĕсем лайăх пурăнма тытăннă. Колхозра тăрăшса ĕçленипе 1936 çулта çĕнĕ пÿрт лартнă. 1937 çулта Варвара Игнатйĕвна колхозра хăй пĕччен 209 ĕçкунĕ туса 105 пăт тĕштырă илнĕ.

Варвара Игнатйĕвнă Журављова йултăшăн паха ĕçне кура ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕ вăхăтĕнче участкăри суйлав комиççи членне суйланă. Кунта та вăл тăрăшса, тÿррĕн ĕçленĕ.

1938 çулхи апрел уйăхĕнче ПСÇЛКС членне кĕнĕ. Кун хыççăн вăл обшчĕствăлă ĕççене тата активлăрах хутшăнса ĕçлеме пуçларĕ.

Варвара Игнатйĕвнă Журављова тÿрĕ ĕçленине, ĕçре шанчăклă пулнине кура Шăмăршă районĕнчи „Красная нива", „Заря", „Свобода", „Красный пахарь" тата Космовски йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пухувĕсенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Александра Александрăвнă ФИРСĂВĂ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Куславкка суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Куславкка комбинатĕнчи рабочисем, работницăсем, инженерлă-техниклă работниксемпе служăшчисем тата Куславкка районĕнчи Комаровкă колхозĕнчи колхозниксем, Куславкка комбинатĕнчи чи лайăх стахановкăна, Ленинла комсомол членне Александра Александрăвнă Фирсăвăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Александра Александрăвнă Фирсăвă Куславкка поçолкинче 1919 çулхи нойабĕрте чухăн хресчен çемйинче çуралнă.

1935 çулта вăл туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнă та çав çулах Куславкка комбиначĕ çумĕнчи хапрăк-савăт шкулне вĕренме кĕнĕ. Хапрăк-савăт шкулĕнчен отлично вĕренсе тухнă хыççăн, Фирсăвă йулташ 1936 çулхи октăберте Куславкка комбинатне станочницă пулса ĕçлеме кĕрет. Производствăра вăл хăйĕн пĕтĕм çамрăк вăй-хăватне стахановла йухăма анлăн сарас ĕçе парать.

Фирсăвă йулташ Куславкка комбинатĕнчи чи лайăх стахановкă. Вăл ĕç нормине йаланах 250 процента çити тултарса пырать. Унпа пĕрлех хăй туса кăларнă продукци пахалăхĕшĕн кĕрешмелине те манмасать вăл. Ун алли витĕр тухнă продукци йаланах пысăк пахалăхлă.

1937 çулта Фирсăвă йулташ ленинла комсомол ретне кĕрет те, политикăлла пурнăçа активлă хутшăнса ĕçлеме тытăнать, вăл производствăри ĕççене комбинатпа рабочи поçолкăн обшчĕствăлă организацийĕсен ĕçĕсемпе çыхăнтарса пыма хăнăхса çитет.

Суйлавçăсем! Чи лайăх стахановкă тата обшчĕственницă пулса ĕçлекен, хамăрăн çĕршыва чунтан йуратакан Александра Александрăвнă Фирсăвăшăн сасăлăр!

Иван Нилолайĕвич БУРКОВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хурамал суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Йĕпреç районĕнчи „Красный водник" тата „Бољшевик" колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хурамал суйлав округĕнчен Йĕпреç районĕнчи Çар Комиссариачĕн çар комиссарне Иван Николайĕвич Бурков капитана палăртрĕç.

Иван Николайĕвич Бурков 1896 çулта Воронĕж облăçĕнчи Хворостанск районĕнчи Коротковкă йалĕнче хресчен çемйинче çуралнă.

Октăбĕрти Аслă Социалисăмлă револљуциччен унăн ашшĕ-амăшĕсем йалхуçалăхĕнче çĕр улпучĕ патĕнчĕ ĕçлесе пурăннă.

И. Н. Бурков йулташ йалти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, 1911 çултан пуçласа 1915 çулччен хăйĕн ашшĕ хуçалăхĕнче тата çĕр улпучĕ патĕнче ĕçленĕ.

1915 çулта ăна патша çарне мобилизацилесе илсе кайаççĕ, çарта вăл рйадовой салтак пулса пурăннă.

1918 çул. Партипе Совет правителĕстви рабочи класăн тата ĕççынни хресченĕсен мĕн пур вăйне çамрăк социалисăмлă государствăна шалти тата тулти тăшмансенчен хÿтлеме мобилизацилеççĕ.

Партипе правителĕстви пĕрре чĕнсенех Бурков йулташ 1918 çулхи кĕркунне Хĕрлĕ Çар ретне хĕвелтухăçри фронта кайать, фронтра çапăçса вăл Октăбĕрти Аслă Социслисăмлă револљуцире çĕнсе илнисене сыхласа хăварать. Фронтра 1919 çулхи август уйăхчен пулнă, тифпа чирлесен ăна Самарти госпитĕле йанă. Чиртен сывалнă хыççăн ăна Тамбăври 21-мĕш стрелковăй полка йанă.

1920 çулта Бурков йулташа Орйол хулине пехотнăй-пулеметнăй курса вĕренме йараççĕ, унтан Мускаври 2-мĕш пехотнăй шкула куçараççĕ.

Çав курсран вĕренсе тухсан ăна Мускаври 14-мĕш дивизин 41-мĕш стрелковăй полкра взвод командирĕ тăваççĕ.

Дивизионнăй тата полковăй шкулра взвод командирĕ пулса 1925 çулччен ĕçлет. Унтан 1929 çулхи ийуњ уйăхне çитиччен—рота командирĕ. Кунта вăл Пĕтĕм Сойузри Коммунисен (бољшевиксен) Партийне кĕрет.

1929 çулта август уйăхĕнче районсенчи çар комиссарĕсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Мускав Çар Округĕнчи Револљуцилĕ Çар Совечĕн приказĕпе Бурков йулташа Ветлугă районĕнчи Çар Комиссариачĕн çар комиссарĕ тăваççĕ, унта вăл 1933 çулхи феврађ уйăхĕччен ĕçлет. Ветлугă Райвойенкоматĕнче çар комиссарĕнче ĕçленĕ вăхăтра вăл ПСК(б)П райком бÿровĕн членĕ, райĕçтăвком президиумĕн тата хула совечĕн членĕ пулнă.

1933 çулхи феврађ уйăхĕнче Бурков йулташа Йĕпреç районĕнчи войенкоматăн çар комиссарнĕ лартаççĕ, кунта вăл халиччен ĕçлет.

Учителсене çар ĕçне вĕрентес, допризывниксене вĕрентес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн тата çĕршыв оборонине вăйлатас тĕлĕшпе ĕçленĕшĕн Бурков йулташа Горький крайĕнчи çутĕç пайĕ, 17-мĕш стрелковăй дивизи штабĕ тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ темиçе хутчĕн те премиленĕ.

Граждăн вăрçинче пулса тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн тата вăл никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн çапăçнăшăн, ССРС Верховнăй Совечĕн Указĕпе Иван Николайĕвич Бурков йулташа „Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ XX çул тултарни" йатлă йубилейлĕ медаљпе наградăланă.

Хурамал суйлав округĕнчи суйлавçă йулташсем! Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă тивĕçлĕ кандидатшăн—Иван Николайĕвич Бурковшăн сасăлăр! Бурков йулташ социалисăм ĕçĕшĕн чунтан-чĕререн тăрăшать, вуншар çулсем хушшинче вăл хăй хамăрăн аслă тăван çĕршывăн патриочĕ пулнине кăтартса пачĕ.

И. В. Дубăвпа П. С. Меценатăвă йулташсем хăйсен суйлавçисем патĕнче

ЕЛĔК. Районри суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕсем пысăк хăваслăхпа иртеççĕ. Вĕсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама тăратнă кандидатсемпе тĕл пулса паллашаççĕ. Ийунĕн 14-мĕшĕнче Мăн Йалкăшри суйлав умĕнхи пуху пулса иртрĕ. Суйлавçăсем 300 çынна йахăн пухăнса хăйсен депутачĕсене—Дубăвпа Меценатăвă йулташсене кĕтсе илчĕç. Пухура Дубăвпа Меценатăвă йулташсем тухса каларĕç.

Дубăв йулташ сăмахĕнчен

— Йулташсем! Мăн Йалкăш участкинчи суйлавçăсем! РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрнар округĕ тăрăх мана кандидата тăратса ман çине пысăк шанăç хунăшăн сире пурне те тав тăватăп.

Пирĕн совет çĕршывĕ куллен кун вăйланса пырать. Пирĕн колхозсем вăйланса пыраççĕ. Колхозниксем пуйан та кулљтурăлла пурăнма пуçларĕç. Тăшмансем тепĕр хут капиталисăм йĕркине çавăрса килме шутларĕç. Анчах пирĕн коммуниссен партийĕ, унăн çулпуçĕ Сталин йулташ çирĕп йĕртсе пынипе, епĕр тăшмансене çапса хуçрăмăр. Малала та епĕр вĕсемпе çине тăрса кĕрешсе пыратпăр. Есĕр суйлавçăсем, ман çине пысăк шанăç хутăр, çак шанăçа епĕ ĕçре тÿрре кăларăп,—терĕ Дубăв йулташ.

Унтан пухура Меценатăвă йулташ тухса каларĕ.

Пуху ийунĕн 26-мĕшĕнче Дубăвпа Меценатăвă йулташсемшĕн сасăлама пулса решени йышăнчĕ.

Тимофей АХАЗĂВ

Шупашкарти пĕрремĕш суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат

1918 çулта советсен çамрăк çĕршывĕ хайар кĕрешÿре аталаннă вăхăтра, Тимофей ашшĕ Алхаç йалти советăн чи малтанхи председателĕ пулна.

Темиçе ĕмĕр хушши сухапуç хыççăн тайăкаланса утнă хресчен хăй кил йышне тăрантарса пурăнма çителĕклĕ çĕр илесси çинчен шухăшлана, анчах хăйма пек сĕткенлĕ çĕр выçă куçла кулаксен аллинче тăнă.

Кашни ирсĕр ĕçĕн шалчи тулатех, тенĕ ваттисем. Калана вăхăт çитнĕ, пуйансем çине карт картласа тĕрлĕ май улталаса çĕр валеçесси иртнĕ. Хăйсен йалĕнче йалсовет председателĕ Алхаç совет правителстви декречĕ тăрăх çĕр валеçнĕ.

Тимофей çуралнă Чакаç таврашĕнче (халљхи Канаш районĕ) Çеменăв кулак арманĕсем çилпе те шывпа та авăрнă, унăн çĕрĕсем таçта çити сарăлса выртнă, халĕ çав çĕрсем халăх аллине куçнă. Çеменăв кулак хăй тавра бандă пухнă.

Пĕрре Çеменăвпа унăн хÿрешкисем тимĕр сенĕксемпе кусексем йатса йалсовет председателĕ Алхаç патне пынă, хапха сăлăпĕсене силленĕ, хÿме урлă каçса кĕрессĕн ахăрашнă. Пÿрт кантăкĕсене çĕмĕрнĕ. Хÿтĕленес тесе, Алхаç пуртă йатнă, унăн арăмĕ хÿме урлă каçса кĕме хатĕрленекен кулаксене хирĕç çавапа хăмсарнă, пĕчĕкçĕ Тимофей ашшĕпе амăшне пулăшнă.

Ун чухне шурă чехословаксем Хусайа çĕмĕрнĕ. Тĕрлемес таврашĕнче тупăсем кĕрленĕ, ессерсен партийĕ йурийех йанă провокатăрсем кулаксен восстанине çĕклесшĕн йалсем тăрăх суйа хыпарсем сарса çÿренĕ. Чакаç йалĕнчи кулаксем чехословаксен бандисене кĕтсе илме çăкăр-тăвар хатĕрленĕ.

Тимофей ашшĕ—Алхаç чÿречерен сиксе тарса çеç вилĕмрен хăтăлнă, вара пĕтĕм çемйипех икĕ ерне хушши вăрманта пытанса пурăннă.

Çак вăхăт Тимофей Аркадйĕвич пурнăçĕнче ĕмĕрлĕхех йĕр хăварнă, тăшмана хирĕç хайаррăн кĕрешме унăн чĕринче те, ăсĕнче те, ĕмĕр сÿнми çулăм чĕрĕлсе йулнă. Вăл пурнăçра чăн-чăн çын пулма ĕмĕтленнĕ.

Хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртессишĕн Ахазăв йулташ мĕн çамрăкранах халăх ĕçне хутшăнса ĕçлет, çав вăхăтрах хăйĕн пĕлÿлĕхне те хăвăрт ÿстерсе пырать. Вăл йалти шкулта пĕтĕмпе те виçĕ çул кăна вĕреннĕ, малала вĕренме учител пулман.

Чакаç йалĕн урамĕпе, сарă çÿçлĕ капăçсăр ача кĕнеке тытса утнине час-часах курма пулнă. Кĕнекесенче тĕлĕнмеле карапсем окенсем тăрăх çÿренисем çинчен, халăх телейĕшĕн кĕрешекен паттăрсем çинчен, пысăк хуласем çинчен калана. Пĕчĕк Тимофей вĕренесшĕн çуннă. Шкулсем йалсенче питĕ сайра пулнă. 14 çулхи Тимофей часах хăйĕн вĕри хастарлăхне кăтартать, вăл никам хушмасăрах йалта ликпункт уçать, унта 30 хĕрарăма вĕрентсе каларать. 1922 çулта Çĕнĕ Мами вуласĕн ĕçтăвкомне çыру ĕçне кĕрет, хастарлă коммуниссемпе çывăх тарса пĕр майах вĕренсе пырать. Вăл тăрăшнипе Çĕнĕ Мами вулăсĕнче 4 çынран малтанхи комсомол йачейки организациленет. 4 çын хĕрÿлĕ ĕççем туса пынă. Йалсенче çпектакљсем лартнă, докладсем тунă. Çапла вара вĕсен йышĕ кĕске вăхăтрах 20 çынна çитнĕ.

Тимофей Аркадйĕвич пĕр канăçсăр йалтан йала çÿренĕ, Ленинла комсомол йатне халăх умĕнче çĕкленĕ. Комсомол руководствинчен нихăçан та уйăрăлман: малтан вăл организатăр, комсомол волкомĕн членĕ, 1926 çулта—волкомолăн ответлă çекретарĕ.

Районсем тунă хыççăн Тимофей Аркадйĕвич Канаша куçать, унта 1929 çулччченех комсомол, профсойуз йенĕпе ответлă вырăнсенче ĕçлет. 1927 çултанпа парти членĕнче тăрать.

Тимофей Аркадйĕвич хăйĕн организатăрла пултарулăхне тăтăшах ÿстерсе пынă. Етеме хаклани, тĕрĕсмарлăха йуратманни унăн чи паха йенĕсем. Вăл пĕчĕккипе те, ваттипе те ыррăн калаçать, кирлĕ чухне пулăшать. Тимофей Аркадйĕвич мĕн пĕчĕкренех вĕренессишĕн çунни унăн чĕринчен нихçан та тухман. Кĕтнĕ ĕмĕчĕ çитет: партин Канаш райкомĕ ăна 1929 çулта Хусанти коммунисла аслă шкула вĕренме йарать. Вăл вĕренÿре те, обшчĕствă ĕçĕнчи пекех, хăйула утăмсемпе малала кайать. Малтан Хусанта пĕр çулталăк вĕреннĕ хыççăн, Чăваш республикĕ Горький крайне кĕнĕ май, Горькинчи коммунисла аслă шкула куçать. Унта вăл пысăк ăнăçлăхпа вĕренсе тухать. Çавна кура парти Крайкомĕ Ахазăв йулташа Горькинчи марксисăм-ленинисăм институтне вĕренме йарать. Вăл вĕреннĕ чухне те парти ĕçне пĕтĕм кăмăлĕпе туса пырать, хапрăк-савăтсенче рабочисем хушшинче пропагандис пулса ĕçлет.

Пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм халăх вăйĕпе Горькинче пысăк автосавăт тума тытăнсан, чăваш халăхĕ вăл строителствăна хăйĕн ывăл-хĕрĕсене йарать. Ахазăв йулташ унта чăваш рабочисем хушшинче ĕçлет, чăвашла радио хаçат кăларса тăрать. Пирĕн партипе правителства, пирĕн халăх талантлă çынсене йуратаççĕ, вĕсене тимлĕн пăхса ÿстереççĕ.

Ахазăв йулташ парти пăхса ÿстернĕ çынсенчен пĕри. Вăл марксисăмпа ленинисăм институтĕнче вĕреннĕ хушăрах çав институтăн филиалĕнче, Дзержински хулинче преподавател пулса ĕçлет.

Унтан вăл Горькинчи йалхуçалăх коммунисла аслă шкулта вĕрентет. 1936 çулта парти Крайкомĕ ăна Чăваш республĕкне ĕçлеме йарать. Кунта вăл малтан ИМЗО-ра преподавател пулса ĕçлет. 1937 çулта Шупашкар парторганизацин конференцийĕ Ахазăв йулташа партин хула комитечĕн членне суйлать. Йулашки вăхăтра вăл партин хула комитечĕн иккĕмĕш çекретарĕ пулса ĕçлерĕ.

Парти ĕçĕнче Ахазăв йулташ хăйĕн организатăрла талантне уççăн кăтартрĕ. Халăх тăшманĕсене—троцкиссемпе бухаринцăсене, буржуалă националиссене хирĕç кĕрешнĕ чух, вĕсене тăрăшыв çине кăларнă чух, Тимофей Аркадйĕвич нумай вăйне хучĕ, чăн-чăн бољшевик пулса ĕçлерĕ. Тăшманла елекçĕсем парти ретне аркатма пăхнă чух та вăл пĕр çухалса каймасăр парти политикине тÿрĕ илсе пычĕ.

Сыхăну çурчĕпе радиокомитетри инженерла-техникла работниксемпе служăшчисем Тимофей Аркадйĕвич Ахазăва Шупашкарти пĕрремĕш суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Тимофей Аркадйĕвич чăваш халăхĕн хисеплĕ ывăлĕсенчен пĕри. Ахазăв йулташа Ленин-Сталин партийĕ пăхса çитĕнтерне. Тимофей Ахазăвăн государствă, халăх ĕçне туса пыма пултарулăхĕ, таланчĕ, вăйхăвачĕ, бољшевикла çирĕплĕхĕ çитет.

Ухсай Йаккăвĕ.
Арк. Ĕсхĕл.

Коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗн тата тепӗр ҫӗнтерӗвӗшӗн

Июнӗн 13-мӗшӗнче Шупашкарти Крупскайа йачӗпе тӑракан пахчара 5-мӗш участкӑри суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху тӗнчери лару-тару ҫинчен Андрейев йулташӑн докладне итлерӗ. Унӑн докладне радио тӑрӑх хулари ӗҫҫыннисем те итлерӗҫ.

Андрейев йулташ хыҫҫӑн доверённӑй инженер Михаил Иванович Судаков йулташ хӗрӳлӗ сӑмах каларӗ. Вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидатӑн—П. И. Калинкина тата ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидатӑн Т. А. Ахазӑв йулташсен пурнӑҫӗпе кун ҫулӗсене тӗплӗн каласа пачӗ, суйлавҫӑсене Калинкинӑпа Ахазӑв йулташсемшӗн сасӑлама чӗнчӗ.

Хӗрӳлӗ те хавхалантарулӑ сӑмахсем П. И. Калинкина тата Т. А. Ахазӑв йулташсем тухса каларӗҫ. В сен сӑмахӗсене суйлавҫӑсем питӗ пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ, темиҫе хутчен тӑвӑллӑн алӑ ҫупрӗҫ.

Пуху округри суйлавҫӑсем патне уҫӑ ҫыру йачӗ.

— Калинкина тата Ахазӑв йулташсем—пирӗн кандидатсем, коммуниссемпе партире тӑманнисен сталинла блок кандидачӗсем, социалисӑмшӑн, рабочисемпе хресчеенсен телейӗшӗн ывӑнма-пӗлмесӗр кӗрешекен, ПСК(б) Партин ҫирӗп те тӳрӗ членӗсем.

Коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑласа, епӗр пирӗн аслӑ ҫулпуҫ, учитӗл Сталин йулташшӑн, тӑван ҫӗршыва татах та тӗреклетессишӗн, унӑн хӑвачӗпе вӑйне ӳстерессишӗн, хамӑрӑн пурнӑҫа татах та пуйан, культурӑлӑ, телейлӗ те савӑнӑҫлӑ тӑвассишӗн сасӑлатпӑр.

Йулташсем, суйлавҫӑсем! Калинкинӑпа Ахазӑв йулташсемшӗн сасӑлӑр! Ку вара коммуниссемпе партире тӑманнисен сталинла блокӗн тепӗр ҫӗнӗ, вӑйлӑ ҫӗнтерӗвӗ пулать. Пурте суйлава!—теҫҫӗ вӗсем хӑйсен ҫырӑвӗнче.

Ҫырӑва пурте пӗр сасӑпа йышӑнсан, пуху хупӑнчӗ. Кайран суйлавҫӑсене вальли государства филармонийӗ пысӑк концерт пачӗ.

„Коминтерн“ колхозра

Чаплӑран та чаплӑ уйав, РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли кун—июнӗн 26-мӗшӗ ҫывхарса килет. Вӑл куна лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илес тесе Елӗк районӗнчи „Коминтерн“ колхозра тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Колхозра агитаципе пропагандӑ ӗҫне туса пыма А. Федорова йулташа хушнӑ. Вӑл халӗ РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗ ҫинчен колхозниксемпе колхозницӑсене каласа ӑнлантарать. Кунпа пӗрлех РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама Вӑрнар суйлав округӗ тӑрӑх кандидата регистрациленӗ И. В. Дубов йулташпа Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Вутлан суйлав округӗ тӑрӑх кандидата регистрациленӗ Т. П. Куликов йулташсен пурнӑҫӗ ҫинчен, вӗсем Ленин—Сталин партийӗшӗн, халӑх ӗҫӗшӗн пӗтӗм чӗререн тӑрӑшса ӗҫлени ҫинчен тӗплӗн каласа парать.

— Епӗр ССР Союзӗн Верховнӑй Советне суйлана вӑхӑтра лайӑх ӗҫлерӗмӗр. Суйлавҫӑсене суйлав ҫинчен тӗплӗн каласа ӑнлантарнипе пурте суйлав участкине пырса, хамӑрӑн пурнӑҫа малалла лайӑхлатса пырассишӗн, халӑх ӗҫӗшӗн ӗҫлекенсемшӗн сасӑларӑмӑр. РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне те лайӑх хатӗрленсе ирттеретпӗр,—тет колхоз председателӗ Тарасӑв йулташ.

Агитаципе пропагандӑ ӗҫне туса пынипе пӗрлех; суйлав кунне производствӑлӑ ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ. Халӗ тырпулсем ҫинчи сумкурӑксемпе кӗрешеҫҫӗ, уйри тыра калчисем ҫинче сумкурӑксем ӳснине Тарасӑв йулташ хӑй сӑнаса тӑрать, сумкурӑксем ӳсни паларсанах вӗсене ҫумлаттарать. Ҫапла 7 гектар клевӗр ҫинчи сумкурӑксене пӗтӗмпех ҫумланӑ.

Ирхи ҫӗртме тумали плана тултарнӑ.

Лайӑх ӳссе ҫитӗнекен тырпула пухса кӗме хатӗрленме тытӑннӑ. Колхозӑн тыра вырмалли машин 2 пур. Вӗсенчен пӗрне йусанӑ тата запас пайсем те хатӗрленӗ; теприне йусаса ҫитермен-ха, унӑн ҫеҫӗ ҫук. „Халех туйанатпӑр вӗсене“,—тет колхоз председателӗ Тарасӑв йулташ. Молотилкӑ пӗрре пур, вӑл йусавлӑ. Ҫавсем туптатма Михайлӑв колхознике хушнӑ. Вӑл пайан-ыран ӗҫе тытӑнать.

Ҫак ӗҫсене туса пынипе пӗрлех, колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе те ӗҫлет. Лашасене усрама вите тӑваҫҫӗ. Ана ҫак кунсенчех, суйлав кунӗччен туса пӗтереҫҫӗ.

Государствӑ умӗнчи йапӑмсене парса татас тӗлӗшпе те ӗҫ йапӑх вырӑнта тӑмасть. государствӑна памали аш-какай хатӗрлев ҫулталӑк планне 80 процент тултарнӑ. Кунпа пӗрлех 2-мӗш кварталта пӗррӗмӗш срукра парса татмали укҫатенкӗне парса татнӑ.

Ф. Филиппӑв.

Вулакансемпе куллен ӗҫлемеле

Колхозниксен обществӑлӑ, политикӑлӑ тата илемлӗ литературӑ вулас туртӑмӗ ҫулран ҫул ӳссе пырать. Иртнӗ ҫулта Чӑваш республикӗнчи 48 библиотекӑран мӗн пурӗ 52.265 кӗнеке илсе вуланӑ. Кӗнеке парас ӗҫри учот вулакансен йышӑнчен беллетристикӑ вулакансем пӗррӗмӗш вырӑнта тӑнине, обществӑпа политикӑла литературӑ вулакансем 20 проц. йышӑннине кӑтартса пачӗ.

Пирӗн республикӑра аслӑлӑхӑн пур ыйтӑвӗсемпе те нумай кӗнеке вуласа тухнӑ ҫынсем пур. Районсенчи библиотекӑсенче кӗнеке фончӗсем ҫителӗксӗр пулнӑ пирки, вӗсем вырӑнти библиотекӑсем урлӑ пӗтӗм Союзри библиотекӑсенчен кӗнеке ҫыранса илсе вулаҫҫӗ. Акӑ, Улатӑр хулинчи А. Ш. Агафонавпа килхуҫи хӗрарӑм Поликӑвӑ (Шупашкар хули) пӗррӗмӗш ҫул мар ӗнтӗ Мускаври Ленин йачӗпе, Ленинградри Салтыков—Щедрин йачӗпе тӑракан библиотекӑсен йалanах вулакансен шутӗнче тӑраҫҫӗ.

Ҫӗрпӳ хулинчи районри библиотекӑ социалисӑмла уйхир ӗҫӗнчи активлӑ ҫынсене: стахановӗцсемпе ударниксене кирлӗ литературӑ вӑхӑтра, ҫителӗклӗ парса тӑрать. Пӗр-пӗрин опычӗсемпе паллашас тӗлӗшпе библиотекӑ лайӑх ӗҫлекен опытниксене пухса йатарласах вечӗрсем туса ирттерет. Ҫав вечӗрсенче библиотекӑрсем обществӑлӑ, политикӑлӑ тата илемлӗ литературӑн паха кӗнекисене масса хушшине ытларах сарасси ҫинчен сӳтсе йаваҫҫӗ.

Анчах пур культурлӑ учрежденисенче те ӗҫсем ҫакӑн пек пулса пымаҫҫӗ-ха. Массӑ ыйтакан литературӑна тупса парасси—культурлӑ учрежденисенче ӗҫлекенсен чи хисеплӗ задачӗ пулса тӑрать.

Вулакансен массине воспитани парас ӗҫре илемлӗ литературӑ тата совет писатӗлӗсем уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Илемлӗ литературӑпа совет писатӗлӗсен пропаганди, обществӑлӑ-политикӑлӑ пропагандӑпа пӗрлех, массӑсен социалисӑм строительствинчи активлӑхне ҫӗклет. Ҫакна кашни культурлӑ учрежденин асра тытса тӑмала. Художествӑлӑ пӗлӳлӗх стем ӑнланӑвне анлӑлатать, ӗлӗкхипе хальхи пурнӑҫа пур йенчен те танлаштарса тӗплӗн сутатса парать.

Ӗҫхалӑхне вырӑс литератури классикӗсен, хальхи совет писатӗлӗсен, Хӗвеланӑҫ Йевропӑри писатӗлсен паллӑ произведенийӗсемпе паллаштарасси—кашни культурлӑ учрежденин ҫывӑх задачи пулса тӑмала. М. Горькин революциллӗ кӗрешӳ ҫинчен ҫырнӑ произведенийӗсем вулакана пысӑк пӗлӳ параҫҫӗ. Акӑ мӗн калать Патӑрйел районӗнчи колхозник Николайӗв йулташ. „Кӗнекесене вулани мана пысӑк уҫӑ кӳчӗ. Епӗ М. Горькин „Амӑшӗ“ йатлӑ романне вуласа тухрӑм та, ӗҫхалӑхӗ ҫак телейлӗ пурнӑҫа тупиччен мӗнле вӑй хурса кӗрешнине тата лайӑхрах ӑнланса илтӗм. Ку кӗнекере кивӗ Российӑри рабочи класӑн йывӑр пурнӑҫӗ ҫинчен каласа панӑ. Епӗ Сталинла Конституцин пысӑк уйрӑмлӑхне тата пӗтӗм тӗнчипе социалисӑм ҫӗнтерес идейӑна ӑнланса илтӗм“, тет вӑл. Николайӗв йулташ Маркс, Енгельс, Ленин, Сталин произведенийӗсене те пысӑк тимлӗхпе вуласа пырать.

Илемлӗ литературӑ халӑх пурнӑҫӗнче мӗнле пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен массӑна ӑнлантарса парас ӗҫре республикӑри пур культурлӑ учрежденисем те кирлӗ таран туса пымаҫҫӗ-ха.

Акӑ, Кӳкеҫри социалисӑмла культура ҫурчӗ художествӑлӑ пултарулӑх кружокӗсемпе нимӗн те ӗҫлемест. Шӑнкӑртам, Шӑмӑршӑ тата ытти чылай районсенче кӗнеке вулакансен йышӗ ытла та сахал. Йӗркесӗрлӗхсем Шупашкар хулинче те пур-ха. Наукӑ ӗҫӗнче ӗҫлекенсем, вӗренекенсем ыйтакан кӗнекесене пурне те тупса парассишӗн тӑрӑшас вырӑнне, аслӑлӑх библиотекиче хупса лартнӑ.

Вуламалли ҫуртсен, колхоз клубӗсен хӑйсен ҫумӗнче литературӑ кружокӗсем организацилемеле. Унта паллӑ произведенисене ушкӑнпа вуласа тухса тӗплӗн сӳтсе йавмала, лекцисем туса ирттермеле. Вулакан, произведенири чи паллӑ типсене уйӑрса илсе, вӗсен образӗсене пур йенчен те тӗрӗс тишкӗрсе тухса, тӗрӗс ӑнланма вӗрентӗр.

Союзла республикӑсемпе автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсене суйлас кампани пынӑ май пӗтӗм халӑхӑн активлӑхӗпе хастарлӑхӗ тата ытларах ҫӗкленчӗ. Ҫак тапхӑрта библиотекӑ работникӗсен ӗҫӗ те ӳсрӗ. Библиотекӑ работникӗсем ӗҫхалӑхне большевикла культурӑна алла ҫавӑрса илме, Маркс, Енгельс, Ленин Сталин произведенисене ӑнланса илме пулӑшмала. Халӑх хушшине паха литературӑ сарассишӗн большевикла ӗҫлемеле.

Возницӑ.

Баку портӗнче „Пионер“ йатлӑ суднӑ ҫинче, шкул ачисем 120 ҫын вӗренеҫҫӗ. Вӗсем моторист, радист, сигнальщик т. ыт. те пулма хатӗрленеҫҫӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Радистсем аппарат ҫинче ӗҫлеҫҫӗ.

(СойузФото).

Пӗлӳ тӗрӗслевӗ Палтай шкулӗнче

Йетӗрне районӗнчи Палтай вӑтам шкулӗн коллективӗ пӗлӳ тӗрӗслевӗсене лайӑх кӗтсе илсе, вӗренӳ ҫулне пысӑк ӑнӑҫлӑхпа вӗҫлет. Майӑн 20-мӗшӗнчен пуҫласа июнӗн 5-мӗшӗччен 5—6 классем таран тӗрӗслӳ пулса иртрӗ. Тӗрӗслӳ паха результатсем пачӗ.

1—2-мӗш классенчи 44 вӗренекентен пурте малалли классене куҫнӑ. Ку классенче хӗл каҫиччен пӗр вӗренекен те „плохӑ“ паллӑ илмен, 1-мӗш класра Чугунова, 2-мӗш класра Йандимирӑвӑ учитӗлсем вӗрентрӗҫ.

1-мӗш классенчи ачасем вӗреннӗ материала аван пӗлеҫҫӗ, ҫырасса та илемлӗ ҫыраҫҫӗ. Ачасем ҫырнӑ тетрачӗсене пӑхсан, кӑмӑл ҫӗкленсех кайать. Никам та пӗр ҫул, икӗ ҫул вӗреннӗ ачасем ҫырнӑ, тесе калас ҫук.

3-мӗш класра 23 вӗренекентен, вӗренсе ӗлкереймен пирки пӗрне ҫеҫ тепӗр ҫул вӗренме хӑварнӑ.

4-мӗш класран 20 ача вӗренсе тухнӑ. Вӗсенчен пӗрне—Ҫтепанӑв Петӗна—„мухтав грамати“ панӑ.

5-мӗш классенче 120 вӗренекен. Вӗсенчен 5-мӗш „А“, 5-мӗш „Б“ класра вӗренекенсем пурте 6-мӗш классене куҫнӑ; 5-ш „С“ класри 39 вӗренекентен 3-не 5-мӗш класра тепӗр ҫула хӑварнӑ, мӗншӗн тесен, вӗсенчен 2-шӗ вӗреннӗ чухне ӗлкӗрсе пырайман, пӗри шкула нумай хушӑ ҫӳреймен. 6-мӗш классенче 85 вӗренекен. Вӗсенчен 4-шне ҫав классенчех тепӗр ҫула нӑ.

Палтай шкулӗнче 8 вӗренекене пӗр класа иккӗмӗш ҫула хӑварни, кунти учитӗлсен коллективне пӑшӑрхантарать. Анчах каламала, шкул тӑшмансен сӑтӑрлӑ ӗҫӗсен йулашкийӗсене пӗтерес, вӗренӳпе воспитани ӗҫӗн пахалӑхне ҫӗклес тӗлӗшпе кӑҫал пысӑк утӑмсем турӗ.

Аслӑ классенче те результатсем пӗлтӗрхинчен чылайах ҫӳлте. Анчах вӗренӳ ҫулӗ мӗнле вӗҫленесси пур предметпа та паллӑ мар-ха, мӗншӗн тесен, пӗлӳ тӗрӗслевӗ июнӗн 17-мӗшӗнче тин пӗтет.

Ҫ. Йакӑвлӗв.

Шкул ачисен праҫникӗ

1937—38 ҫулхи вӗренӳ ҫулӗ пӗтнӗ йатпа, Шупашкар хула совечӗпе комсомол хула комитечӗ июнӗн 21-мӗшӗнче хулари пуҫламӗш тата вӑтам шкулсенче вӗренекен ачасен праҫникне ирттерме хатӗрленеҫҫӗ.

Шкул ачисен праҫникӗ „Темп“ стадионӗнче пулать. Уйава хатӗрленесси хӗрӳллӗн пырать. Кунта кашни шкул хӑйӗн номӗрӗсемпе тухать. Стадионра спорт выступленийӗсем пулаҫҫӗ. Оркестрсем музыкӑ калаҫҫӗ. Уйрӑм шкулсенчи хорсемсӗр пуҫне, праҫникре хулари мӗн пур шкулсенчен организациленӗ ушкӑнлӑ хор тӗрлӗрен йурасем йурлать.

Шкул ачисен праҫникӗнче вылйама Ача-пӑча театрӗпе Пионерсен ҫурчӗ тӗрлӗрен выступленисем хатӗрлеҫҫӗ.

Хаҫатсене пӑхса тухни

Хаҫат вулакана хисеплес пулать

Йелчӗк районӗнчи „Колхоз йалавӗ“ хаҫат пропагандиссемпе агитаторсене политикӑлӑ-агитацилӗ ӗҫе ӗҫҫыннисене ӑнланмала чӗлхепе тума, кандидатсем ҫинчен кашни суйлавҫӑна ӑнланмала каласа пама вӗрентет.

Пропагандиссемпе агитаторсене вӗрентни, паллах, кирлӗ. Анчах „Колхоз йалавӗ“ хаҫат редакцинче ӗҫлекен йулташсем хаҫатра пичетлесе кӑларакан кашни заметкӑна, кашни статйана вулакансене ӑнланмала ҫырма кирлине асра тытса ӗҫлеҫҫӗ-ши? Акӑ, майӑн 30-мӗшӗнче тухнӑ 50-мӗш номӗрлӗ хаҫат:

„Хӑшпӗр уйрӑм колхозсенче халӗ те распределени (?) пӗтмен“, тесе ҫавӑрттарса хурать. 51-мӗш номӗрте „Колхоз йалавӗ“ ҫапла ҫырать:

„Октябрь“, „Комбайн“ тата Ленин йачӗпе тӑракан колхозсенче пар (?) тӑвас ӗҫе лайӑх организацилени „Н. Волна“, „Авангард“ тата М. Горький йачӗпе тӑракан колхозсенче пар тӑвассине лайӑх организацилениине пӗлтӗрмест. Ҫаках райҫӗрӗҫ пайӗнчи работниксем пар тӑвас ӗҫпе лайӑх йертсе пынине кӑтартмасть“.

Чӑваш чӗлхине манма пуҫламанши есӗр, йулташсем?

Тата ыйтасчӗ, редакци ҫакна та колхозниксем ӑнланаҫҫӗ тесе шутлать-ши:

„Лондӑн майӑн 31-мӗшӗнче (ТАСС). Мадрид корреспонденчӗн (?) Рейтер агенстви пӗлтернӗ тӑрӑх, мйатежниксем (?) Валенси хули ҫине бомбасем пӑрахнӑ чухне Англин „Пентемес“ текен пароходне путарнӑ“.

Ку вӑл вулакансенчен мӑшкӑлани ҫеҫ пулать.

РСФСР Верховнӑй Совет депутатне суйлама кандидата тӑратнӑ орденоносец Леонти Остриаков йулташ хӑйӗн пурнӑҫӗ ҫинчен йаланах тӗрӗссине каласа парать. Ун ҫинчен хаҫатсенче те темиҫе хутчен те ҫырнӑ. „Колхоз йалавӗ“ хаҫат Остриаков йулташӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсенчи фактсене пӑтраштарать. Пирӗн шутпа ҫак факт та „Колхоз йалавӗ“ хаҫат вулакансемшӗн ӑнланмала ҫырма тӑрӑшманнине йар уҫҫӑн кӑтартса парать.

Ҫынсене вӗрентнипе ҫеҫ ҫитмест, хамӑрӑн та ҫынсенчен вӗренмеле. „Колхоз йалавӗ“ редакцинче ӗҫлекенсен ҫакӑ вӑл ҫук-ха халлӗхе. Ҫырса пулӑр, теҫҫӗ пулмала вӗсем. Хаҫат ӗҫӗ ҫине ҫавӑн пек ответсӑр пӑхассине пӗтерме тахҫанах вӑхӑт ӗнтӗ.

Ҫӗнӗ Мускав

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Ҫӗнӗрен тунӑ Крымски кӗпер.

(Сойузфото).

Суйлав саккунне пӑсмала мар

РСФСР Верховнӑй Советне суйламалли Положенире тата ЧАССР Верховнӑй Советне суйламалли Положенире те, Сталинла Конституци принципӗсене пӑхӑнса, суйлавҫӑсен списокӗсене мӗнле тумаллине тӗплӗн кӑтартса панӑ. Ҫав саккуна хытӑ пӑхӑнса ӗҫлемеле, саккунӑн пӗр пунктине те пӑсмасӑр ӗҫлемеле,—ҫакӑ пулать ӗнтӗ совет органӗсем умӗнче тӑракан задачӑ.

Положенин II мӗш сыпӑкӗнчи 7-мӗш статйара „суйлавҫӑсен спискине мӗнле йӗркепе тумаллине тата ҫав ответлӑ документа хуласенче тата йалсенче камсем ҫырса хатӗрлемеллине уҫҫӑн кӑтартса панӑ. Ҫав сыпӑкри 8,9,10-мӗш статйасем ҫапла калаҫҫӗ:

„8 статйа. Суйлавҫӑсен спискисене пур граждансене те,—суйлав прави пуррисене, спискӑсене тунӑ вӑхӑта ҫав совет территорийӗнче (йалан йе вӑхӑтлӑха) пурӑнаканнисене суйлав кунӗ тӗлне 18 ҫула ҫитнисене кӗртеҫҫӗ.

9 статйа. Суйлавҫӑсен спискисене суд пригӑварӗ тӑрӑх суйлав прависӗр хӑварнӑ ҫынсене, суд пригӑварӗнче суйлав прависӗр хӑварма кӑтартнӑ пӗтӗм срук хушшинче, ҫавӑн пекех тата саккун кӑтартнӑ йӗрке тӑрӑх асран тухнӑ тесе шутланӑ ҫынсене кӗртмеҫҫӗ.

10 статйа. Суйлавҫӑсен спискисене кашни суйлав участки тӑрӑх алфавит йӗркипе, суйлавҫӑн хушаматне, йатне, ашшӗ йатне, миҫе ҫултине тата ӑҫта пурӑннине кӑтартса тӑваҫҫӗ те, ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн председатӗлӗпе ҫекретарӗ алӑ пусаҫҫӗ“.

11-мӗш статйара тата ҫапла каланӑ: „Суйлавҫӑсене нихӑшне те пӗр суйлав спискине кӗртниччен пуҫне урӑх спискӑна кӗртме йурамасть.“

Суйлавҫӑсен хӑйсен суйлав правине пурнӑҫа кӗртесси чи малтанах вырӑнти совет органӗсем суйлавҫӑсен спискине тӗрӗс туниччен килни пуринчен те паллӑ. Суйлав саккунӗ тӑрӑх суйлавҫӑсен спискине кӗртнӗ йе „сасӑлама права паракан удостоверени“ илнӗ гражданин ҫеҫ сасӑлама пултарать. Ҫапла ӗнтӗ, суйлав кампанине ирттернӗ вӑхӑтра суйлавҫӑсен списки пит пысӑк вырӑн йышӑнакан политикӑлӑ документ пулса тӑрать.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне ирттерме хатӗрленес ӗҫре республикӑра лайӑх опытсем пит нумай. Чылай ҫӗрте суйлавҫӑсен спискисене тӑса, ним чӗркеленчӗксӗр, уҫҫӑн вулмала ҫырса тунӑ. Спискӑсене витринӑ ҫине типтерлӗ ҫакса хунӑ. Акӑ, тӗслӗхрен, Ҫӗмӗрле районӗнчи Тукас йалӗнче (йалсовет председатӗлӗ Шорка йулташ, вӑлах участкӑри суйлав комиҫҫи председатӗлӗ пулса ӗҫлет) суйлавҫӑсен спискине тӑвиччен малтан йалсовет территорине кӗрекен гражданcене пурне те тӗрӗслесе ҫырса тухнӑ. Ун хыҫҫӑн кайран суйлавҫӑсен хушамачӗсене Положени ҫинче кӑтартнӑ пек алфавит тӑрӑх йӗркелесен тин суйлавҫӑсен спискине бланк ҫине ҫырнӑ. Ҫавӑн пек тӑса та йӗркелӗ ҫырнӑ спискӑна витринӑ ҫине ҫакса хунӑ.

Ҫав йалсоветра суйлав ҫуртне те лайӑх илемлетнӗ. Участкӑри суйлав комиҫҫийӗ ӗҫлекен пӳлӗмре сӗтелсене хӗрлӗ материпе витнӗ, пукансем лартса тухнӑ, ҫтенасем ҫине мӗн кирлӗ таран плакатсем, лозунгсем тата ҫулпуҫсен портречӗсене ҫакса тухнӑ.

Пӑрачкав районӗнче Кудеиха йалӗнче кашни кил ҫумне плакатсем ҫыпӑҫтарса тухнӑ. Суйлав пулса иртмели ҫуртра кабинӑсене, сӗтелсемпе пукансене—пурне те вырнаҫтарса ҫитернӗ, ӑҫта кирлӗ ҫӗре портретсем, плакатсемпе лозунгсем ҫыпӑҫтарса тухнӑ.

Шахасӑн районӗнче Йамашри суйлав участкинче суйлавҫӑсен спискине кӑтартулӑ тунӑ. Пурӗ кунта 828 суйлавҫӑ. Вӗсен хушамачӗсене, йачӗсемпе ашшӗ йачӗсене тата миҫе ҫултине, ӑҫта пурӑннине кӑтартса алфавит йӗрки тӑрӑх пит тӑса ҫырса хатӗрленӗ. Спискӑ ҫинче чи кайран йалсовет председатӗлӗпе ҫекретарӗ алӑ пусса пичет хунӑ. Спискӑна лайӑх курӑнмала вырӑна ҫакнӑ. Участкӑри суйлав комиҫҫи ӗҫлекен пӳлӗме тата суйлав пулса иртмели пӳлӗме аван илемлетнӗ.

Республикӑра ҫавӑн пек пит тӑрӑшса ӗҫлекен йалсоветсемпе суйлав комиҫҫийӗсем ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ. Анчах та, РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне хатӗрленес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлекен йалсоветсен опычӗсене ытти йалсоветсене куҫарас тӗлӗшпе райӗҫтӑвкомсемпе хаҫат редакцийӗсем пит йапӑх ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та хӑшпӗр йалсоветсемпе суйлав комиҫҫисем суйлава хатӗрленес тӗлӗшпе сахал мар йанӑшсем тӑваҫҫӗ.

Йетӗрне районӗнчи Чурнай йалсоветӗнче суйлавҫӑсен спискине ахаль хут ҫинчех тунӑ та, йалсовет пичетне хумасӑрах ҫапса хунӑ. Удейкина Александра Макаровнӑ йатне икӗ ҫӗре кӗртнӗ. Чылай суйлавҫӑсен тӗлне вӗсен ашшӗ йачӗсене тата хӑш ҫулта ҫуралнине ҫырмасӑрах хӑварнӑ. Суйлав комиҫҫийӗ вальли тата суйлава вальли халиччен ҫурт палӑртса хуман.

Ҫав районтах Кӑкшӑм йалсоветӗнче тата Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Кӑмаркка йалсоветӗнче суйлавҫӑсен спискине удостоверени тӑрӑх суйлакансен бланки ҫинче тунӑ. Атнар йалсоветӗнче 1920 ҫулта ҫуралнисенчен 20 ҫынӑнне хӑш уйӑхра ҫуралнине кӑтартмасӑр спискӑ тунӑ. Пӗр ҫемйере—3 суйлавҫӑна спискӑна кӗртмесӗр хӑварнӑ.

Ҫавӑн пек йанӑшсем ытти районсенче те пур. Тутаркас районӗнчи Кашмаш йалсоветӗнче суйлавҫӑсен спискине йалсовет председатӗлӗпе ҫекретарӗ алӑ пусмасӑрах ҫырса ҫакнӑ. Мӑн Сентӗр йалсоветӗнче суйлав саккунне пӑсса, вырӑс суйлавҫӑсене чӑвашсенчен уйрӑм спискӑ туса ҫапнӑ.

Шӑмӑршӑ районӗнчи Шӑмӑршӑ йалсоветӗнче суйлавҫӑсен спискине 18 ҫул тултарманнисене кӗртнӗ. Патӑрйел районӗнчи Карапай Шӑмӑршӑ йалсоветӗнче суйлавҫӑсен спискин кашни бланки ҫине йалсовет пичетне пусса тухнӑ.

Чылай ҫӗрте тата суйлавҫӑсен йачӗсемпе ашшӗ йачӗсене, хушамачӗсене йанӑш ҫырнисем пур. Патӑрйел йалсоветӗнче пӗр спискӑ ҫинче Давлетшина Розалийа йатне виҫӗ хут; тӗрлӗрен пӑсса пӗтерсе ҫырнӑ. Ҫав йалсоветрах вилнӗ ҫынӑн йатне спискӑна кӗртнӗ. Чылай суйлавҫӑсенне килти адрӗсӗ вырӑнне учрежденисене кӑтартса ҫырнӑ.

Турхан районӗнчи Шаймурзин йалсоветӗнче Елимова Прасковйа Кҫенофонтовнӑ йатне спискӑ ҫинче „Елимова Перасковйе Кҫенефонт“ тесе ҫырнӑ. Йетӗрнери ҫу ҫапакан савӑтри суйлав участкине кӗрекен суйлавҫӑсен хушамачӗсене, йачӗсене тата ашшӗ йачӗсене пӗр тӗрлӗ чернилпа, пӗр алӑпа ҫырнӑ, ҫуралнӑ ҫулне тата пурӑнакан вырӑнне тепӗр алӑпа тата тепӗр тӗслӗ чернилпа ҫырнӑ.

Ҫак фактсем вӗсем пурте вырӑнсенчи совет органӗсен руководителӗсем суйлавҫӑсен спискине тӑвас ӗҫ ҫине бӳрократла пӑхнине пӗлтереҫҫӗ. Суйлав саккунне пӑсни, суйлавҫӑсен правине пӑсни ан пултӑр тесен,—чи малтанах совет органӗсенчи бӳрократисӑма ҫапса хуҫмала.

Суйлавҫӑсен прави ҫине бӳрократла пӑхнине кӑтартакан тепӗр тӗслӗх вӑл—айакка куҫса кайакансене сасӑлама права паракан удостоверенисем памани. Йалсоветсен айакка ӗҫлеме кайакансене сасӑлама права паракан удостоверени парса йарасси ҫине хытӑ ҫавӑрӑнса пӑхмала.

Суйлав пулса иртмели ҫурта пӗтӗмпех хатӗрлесе хурасси вӑл—пайан тумали ӗҫ. Анчах чылай ҫӗрте суйлав ҫурчӗсене илемлетмен, портретсене, плакатсемпе лозунгсене тупса ҫакман, РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйлама чӗнекен лозунгсем вырӑнне „Декабӗрӗн 12-мӗшӗ—ССРС Верховнӑй Советне суйламалли кун“ тенӗ лозунгсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Тата суйлав ирттерме ҫурт тупса хуман вырӑнсем те пур-ха (Кӑмаркка, Хӗрлӗ Чутай р.; Перҫирлан, Чурпай—Йетӗрне р.).

Округсенчи суйлав комиҫҫийӗсем те йӗркелӗ ӗҫлесе тӑманнисем пур. Акӑ, тӗслӗхрен, Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Чуварлейри округ комиҫҫийӗнче суйлав кампанийӗ пуҫланнӑранпах дежурнӑйсем тӑратассине организацилемен. Округри суйлав комиҫҫийӗсенчен хӑшпӗрисем хӑйсен тумала мар ӗҫсене тӑваҫҫӗ. Арапуҫри округ комиҫҫийӗ политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫ планне тунӑ; Турханри комиҫҫи агитаторсемпе тата доверённӑйсемпе канашлу туса ирттернӗ. Карачайӗври комиҫҫи хӑйӗн ларӑвӗнче доверённӑйсене отвод тӑвасси ҫинчен сӳтсе йавнӑ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли кун ҫитесси нумай йулмарӗ. Суйлав саккунне, ӗҫҫыннисен правине пӑсас йенӗпе пулнӑ йанӑшсене парти тата совет органӗсен пит хӑвӑрт тӳрлетмеле. Тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ халӑх тӑшманӗсен йулашкийӗсемпе вӗсен хӳрисем суйлава пӑсма хӑтланасси ҫинчен пӗрттӗ манмала мар. Вӗсем пирӗн кандидатсене—РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйлама палӑртнӑ кандидатсене варалама, суйлава организацилӗхсӗр ирттермеле тума пӑхӗҫ. Ҫавӑнпа та РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйлас ӗҫе—ҫав тери пысӑк политикӑлӑ ӗҫе епӗр нийепле те самотӑкпа йама пултараймастпӑр. Вырӑнти парти тата совет органӗсене малта кӑтартнӑ йанӑшсене хӑвӑрт тӳрлетме пулӑшса пымала, ӗҫе тӗплӗн организацилесе, Сталинла Конституци тӑрӑх ӗҫҫыннисене панӑ правапа пӗтӗмпех уса курмала.

Р. Алексейӗв, Н. Муравйов,
Йа. Муратӑв.

4 ЧĂВАШ КОММУНĔ 135 (4948) №, 1938 ç. Ийун, 16

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Йулашки кунсенче Чженчжу районĕнче (Сурçĕр Китай, Хенаҫ провинцийĕн сурçĕр пайĕ) вăрçă ĕçсем чарăннă. Йапони çарĕсем шыв илсе лартас йенчен харушă районсенчен (китайĕсем Хуанхе йухан шывĕ патĕнчи çула çĕмĕрсе тăкнипе çав районсене шыв илсе лартнă) хĕвелтухăçнелле чакаççĕ. Йапонĕсем Кайфын (Хенаҫ провинци столици) районĕнче те кăйала чакаççĕ. Кайфынрен кантăрала Китай çарĕсем Чеҫьу патĕнче Йапони позицисем çине атакасем тăваççĕ.

Шаньси провинцин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче Китай çарĕсем чылай хуласене кĕрсе ларнă Йапони гарнизонĕсене хупăрласа илнĕ.

Шаньси провинцин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче пĕрле пунктсем тăрăх сапаланса кайнă Йапони дивизисенчен пĕри икĕ ерне хушши ĕнтĕ хăйсен тĕп çарĕсенчен татăлса тăрат. Çав дивизи çимĕçсем тата вăрçă хатĕрĕсем çитменнипе хытăн аптрат, кунсăр пуçне китайĕсем ăна пысăк çухатусем кÿреççĕ.

Вăтам Китайра. Нанкинран хĕвеланăçĕнелле районта Йапони çарĕсем активлăн вăрçма пуçланă. Йапони дивизийĕ, Луҫжоу районĕнче вăрçакансекер, виçĕ колоннапа наступлени туса пырат. Çапăçусем Шучен районĕнче (Чаоху кулĕнчен хĕвеланăçнелле) пулса пыраççĕ.

Ийунĕн 13-мĕшĕнче Йапони самолючĕсем каллех Кантон çине (Кăнтăр Китай) вĕçсе пынă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Левантă фронтĕнче Пусбла де Вальверде районĕнче (Теруелтен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле) республиканĕсем пăлхавçăсен тĕмисе пысăк атакине сирсе йарахнă. Пусебла дел Сид районĕнче республиканĕсем пăлхавçăсене хирĕç хытăн вăрçнă хыççăн Ель Кастел та Ла Лома патĕнче хăйсен позицисенчен урăх вырăна куçнă. Борриоҫ районĕнче (Кастеҫонран сурçĕр-хĕвеланăç йенче) республиканĕсем Молино йатлă çулă вырăнта пăлхавçăсене позицисенчен хĕссе кăларнă. Республиканĕсем икĕ офицера, 79 салтака тыткăна илнĕ, çаван пекех вăрçă хатĕрĕсем те чылай туртса илнĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем пулман.

* * *

Ийунĕн 12-мĕшпе 13-мĕшĕнче пăлхавçăсемпе интервентсен авиацийĕ Сагунто, Аликанте порчĕсем çине тата сыран хĕрринчи ытти пунктсем çине те бомбăсем пăрахса тапăннă.

Бомбăсене пит нумай пăрахнă.

(ТАСС).

Совет пианисĕсем Париже кайаççĕ

БРЮССЕЛ, ийунĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕнче çĕнтернĕ Емиҫ Гилельспа Йакав Флиер, Бельгире Льежс хулинче панă концерчĕсем совет пианисĕсемшĕн çĕнĕ çĕнтерÿ пулнă. Гилельспа Флиер тухса выҫланисем пит те пысăк çитĕнÿсемпе иртнĕ.

Ийунĕн 15-мĕшĕнче пианиссем Фейберг профессорпа пĕрле Париже тухса кайаççĕ.

Сурхи тырăсене акас плана 99 процент тултарнă

Ийунĕн 10-мĕшне пĕтĕм Сойуз тăрăх сурхи тырăсене 83.589 пин гектар акнă — плана 99 процент тултарнă. Колхозсем 76.706 пин гектар, совхозсем 6.883 пин гектар акнă. Пучахла тырăсене, çĕр мамăке, сахăр кăшманне, хĕвелçавăрăнăшне иртнĕ уйăхрах акса пĕтернĕ. Отчотла пилĕккунлăхра колхозсем пĕтĕм акас плана тултарнă. Кантăр, пахча-çимĕç, куракăксем акса пĕтермен-ха.

(ТАСС).

КĔСКЕН

Вĕренекенсен йышĕ. Авăспÿрт Килечри (Шăхасан р.) шкул 1838 çултанпа ĕçлет. Октябр революцийĕнчен вăл шкулта пĕр клас кăна ĕçленĕ, унта çулсерен 26 ача вĕреннĕ. 1936 çулта кунта вăтам шкул усрăç. 1937—38-мĕш вĕренÿ çулĕнче пурĕ 9 клас ĕçлерĕ, вĕсенче 370 ача вĕренчĕ. Çитес вĕренÿ çулĕнче 10 клас ĕçлемелле.

Й. Степанăв.

200 тенкĕлĕх хаçат-журнал. Суйлав кунне—ийунĕн 26-мĕшне хатĕрленсе май, Матăшури (Шăхасан р.) инвалидсен ертелĕ хăйĕн членĕсем валли тĕрлĕрен хаçат-журналсем 200 тенкĕлĕх çыраннĕ.

В. Корнилăв.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Тăван совет çĕршывĕшĕн" йатлă картинă.

И. М. Тоидзе художникĕн ÿкерчĕкĕ.

„Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс Çар флочĕ 20 çул тултарни" выставкăран.

(Сойузфото)

„Прогресс" колхоз тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленет

Йĕстĕрне районĕнчи „Прогресс" колхозра пĕтĕм ĕçе РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлавсене хатĕрленессипе çыхăнтарса туса пыраççĕ. Колхозниксем историлĕ куна—ийунĕн 26-мĕшне йалхуçалăхĕнче туна çитĕнÿсемпе, государствăна уменчи обйазательствăсене пурнăçа кĕртнипе кĕтсе илесшĕн кĕрешеççĕ. Халĕ вăхăтра колхозниксемпе колхозницăсем çум çумлас, тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленес ĕçсене ĕçлеççĕ.

Çумкурăксемпе кĕрешме кашни бригадăра звеносем туна. Çав звеносем çумне уйрăм участоксем уйăрса çирĕплетсе панă. Звеносем участоксенчи калчасене таса тытса çитĕнтерес тĕлĕшпе тырпулсем пиçсе çитиччĕнех ответлă пулса тăраççĕ. Çум çумлама уйăрнă звеносем ку вăхăтчен 266 гектар çинчи калчасене çумкурăксенчен тасатнă.

Çум çумлас ĕçре пиллĕкмĕшпе улттăмĕш бригадăсенчи звеносем малта пынине палăртса хăвармала. Вĕсем хăйсене уйăрса панă участкăсене йаланах таса тытса тăраççĕ.

Колхоз çак иртнĕ кунсенче уйа 6256 лав тислĕк кăларчĕ.

Колхозри тимĕрçĕсем—Г. Иванов тата А. Усăв йулташсем йалхуçалăх машинисене—жнейкăсене, утă çулмалли, авăн çапмалли тата тырăсене сăвăрмалли машинăсене йусаса çитерчĕç.

Çапнă тырпулсене хума ампарсене те хатĕрленĕ, вĕсене дезинфекци туна. Çак ĕçсемпе пĕрлех колхозăн туса çитереймен, кайа йулнă ĕç пур. Ку вăхăтченех витнĕ итемсене йусаман тата вĕсене пĕлтĕрхи кивĕ уламсенчен тасатман. Çак çитменлĕхе кĕске срукрах пĕтерсе тырпулсене уйран пуçтарса кĕме пур йенчен те хатĕр тăмала.

Й. Çеменăв.

Çĕрулмине лайăх пăхса ÿстереççĕ

Аслă Чакри (Вăрмар р.) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз кăçал çĕрулми тухăçне ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлет. Çуракинче 15 гектар „лорх" суртла çĕрулмине йаровизацилесе лартса хăварнă. Çак суртлă çĕрулми ахаль лартнинчен чылай маларах шăтса тухнă.

Çĕрулми лартнă участкă çинчи çумкурăксене çумласах тăраççĕ. Çак кунсенче çĕрулми кассисен хушшисене кăпкатса çемçетме тытăнаççĕ.

В. Андрийанăв.

Шупашкар хулинчи пионерсен лагерĕ

Ĕнер, ийунĕн 15-мĕшĕнче, Илйинкăра пионерсен лагерĕ уçăлчĕ. Ку лагере йатарласа Шупашкар хулинчи ачасем валли организациленĕ. Лагер ийунĕн 10-мĕшĕнче ĕçлеме пуçланă, унта малтанхи çменăпа 150 ача пуханнă.

Лагере чаплăн уçнă çĕре Шупашкартан духовой оркестр тата хула совечĕпе комсомол хула комитетĕнчен представителсем пынă.

Пионерсен лагерĕ Илйинкăри шкул çуртне вырнаçнă. Ачасем канмалли çуртра апатланаççĕ.

Кашни хуçалăх хаçат-журнал илет

КĂШАРКАССИ (Çĕрпÿ р.) йалсоветĕнчи Кудрйашов почтальйон колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Халĕ 350 хуçалăха тĕрлĕрен хаçат-журналсем 370 екземпльар килсе тăраççĕ. Çыраннă хаçат-журналсене вăл подписчиксем патне вăхăтра çитерет.

Кудрйашов йулташ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама тăратнă кандидатсем çинчен хаçатсенче çырнă статйасене вуласа парат, ăнлантарат.

А. Иванов.

Й. И. Одинцов йулташа Чăваш АССР Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссарне лартасси çинчен

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком Президиумĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çапла йышăнат: Йевгений Иванăвич Одинцов йулташа Чăваш АССР Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссарне лартас.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕ З. АНДРЕЙЕВĂ.
Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком çекретарĕ Т. ВАÇИЛЙЕВ.

Шупашкар хули, 1938 ç. ийунĕн 13-мĕш.

Çамрăк художникĕн çĕнĕ картинĕ

Улатăрти художĕствăпа гравюра училищинче вĕренекен Алексей Çеменăв хăйĕн тăван йалне Чупайа (Вăрмар р.) çуллахи каникула таврăнсан, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ май, ийунĕн 26-мĕш тĕлне „Суйлавçăсем хăйсен депутатне кĕтсе илни" йатлă картинă çырма тытăнчĕ. Кунсăр пуçне вăл тĕрлĕрен картинăсемпе етÿдсем те ÿкерет.

И. Антонăв. П. Виноградăв.

Футбол

Горький—Шупашкар

Шупашкарти стадиона хулари ĕççыннисем ийунĕн 14-мĕшĕнчи пек нумай пуханни кăçал пулманха. Ку кун Горький хулинчи „Зенит" общчĕствăн футбол командипе Шупашкарти „Темп" общчĕствин футбол командисем йулташла тĕлпулса выльарĕç.

Пит интереслă вăйăра хăнасем футбол вăййин маçтăрлăхĕ тĕлĕшпе шупашкарсенчен нумай малта тănине кăтартрĕç. Горькăвцăсем лăпкă выльаççĕ, мечкăна пĕр-пĕрне пĕлсе параççĕ, шупашкарсен алăкĕ çине тапăннă вăхăтра вĕсен организацилĕх тĕп вырăнта тăрат. Кашни выльаканĕ—хăй вырăнĕнче. Нападенире выльакан пйаторкă тата сылтăм йенче чупакан выльани пурне те кăмăла кайат. Çине тăрса тапăнса пыни, мечкăна шупашкарсенчен хăвăрт туртса илни, туртса илнĕ мечкăна айалтан илсе пыни, мечкăна алăкала тапни—акă çаксемпе уйрăмах палăрчĕç „Зенит" футболисĕсем.

Вăйă пуçлансан 17 минутран хăнасем темпăвцăсен алăкне малтанхи мечкăна тапса кĕртрĕç. Шупашкар команди вăйă шутне танаштарасшăн. Хăнасен алăкне хупăрласа пырат. Çак вăхăтра горькăвцăсенчен пĕри мечкăна алăпа тытат. Судйе 11 метăртан тапмалли штраф парат. Анчах Сивов йулташ мечкăна алăкран айакка тапса йарат. „Зенит" футболисĕсем вăййа каллех хăйсен йенне илеççĕ. Малтанхи таймра тепĕр мечкă тапса кĕртеççĕ.

Иккĕмĕш таймра темпăвцăсем çине тăра пуçларĕç. Сылтăм йенче чупакан Гурйĕв, нападенири Блинов, тепре чухне Соколов (сулахай йенче чупакан) сÿрĕк выльанине пула алăк патне илсе çитернĕ мечкăна çапса кĕртеймеççĕ. Вăйă пĕтесси 7 минут йуличчен 2:0 шут улшăнмарĕ. Вăйă пĕтесси çывхарса çитсен Соколов мечкăна çине тăрса алăк патне илсе пычĕ, вăл ăна Сивова пачĕ, лешĕ хăнасен алăкне пит те лайăх тапса кĕртрĕ. Вăйă 2:1 шутпа—Горький команди çĕнтернипе пĕтрĕ. Шупашкар командинче хÿтĕлевçĕ Илйин („Спартак" командинчен илнĕскер) тата Михайлăв лайăх выльанине палăртмала. Илйин темиçе хутчен те илме кансĕр мечкăна тапса йарса хăйсен алăк умĕнчи хăрушăлăха сирчĕ.

Р. Шашков.

Суд

Перекет кассинчен улталаса укçа илнĕшĕн

Йеншик Чуллă йалĕнчи (Трак р.) Митрофан Йершов Шупашкарта ĕçленĕ чухне Шупашкарти 60-мĕш номерлĕ перекет кассине мартăн 28-мĕшĕнче 30 тенкĕ укçа хывнă пулнă. Йершов хăй йулташĕпе—Ташковпа, укçа нумай илес шутпа, перекет касси кĕнеки çине 30 тенкĕрен 3030 тенкĕ туса улталаса илме шутланă. Çак укçана илесси çинчен перекет кассинче ĕçлекен контрольоршă Вахровăпа калаçса татăлса килĕшнĕ. Вара апрелĕн 5-мĕшĕнче Йершовпа Ташков улталаса çырнă перекет касси кĕнекипе 1800 тенкĕ илнĕ. Укçине виççĕшĕн хушшинче валеçнĕ. Ку ĕç çинчен перекет кассинче ĕçлекен Дударăва йулташ квартăлти списăк тунă чухне пĕлсе, айăплисене суда панă.

Шупашкар хулинчи халăх сучĕ ийунĕн 7-мĕшĕнче çак ĕçе пăхса тухса, Митрофан Йершова Уголовлă Кодексăн 120-мĕш статйин 1-мĕш пайĕ тăрăх айăпласа 5 çул хушши тĕрмере хупса усрамала, Петр Ташкова 2 çул хушши тĕрмере хупса усрамала, Вахровăна 4 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермеле турĕ.

В. Петров.

Нормăсем параççĕ

ВĂРНАР. Ветеринарипе зоотехника техникумĕнче вĕренекенсем 1937—38-мĕш вĕренÿ çулĕнче 115 ача—ГСО, 118 ача—ПВХО, 27 ача—ГТО, 2 ача БГТО значокĕсен нормине, 12 ача Ворошилăв пек тĕл перекенсен пĕррĕмĕш сыпăк нормине, 1 ача 2-мĕш сыпăк значок нормине панă.

М. Петров.

ХРОНИКĂ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Федăр Максимăвич Ваганăв йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Çул-йĕр управленин начальникĕ пулма çирĕплетнĕ.

Шупашкарти 16-мĕш участкăри суйлав комиççийĕ пĕлтерни

Шупашкарти 16-мĕш участкăри суйлав комиççи Трахом институчĕн канцельаринче ĕçлет.

Трахом институтне кăçалхи ийунĕн 26-мĕшĕччен суйлав кунĕччен килекенсен пĕрле паспарт йе профсойуз билечĕ тата сасăлама права илнĕ ĕнентерÿ илсе килмелле.

Суйлав комиççи.

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" хаçата вулакансене

Ийунĕн 21-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, сыхăну сурчĕн клубĕнче „Чăваш Коммунĕ" хаçата вулакансен конференцийĕ пулат.

Конференцине Шупашкар хулинче пурнакан вулакансене, çывăхри (Ишлей тата Шупашкар районĕсенчи) йалсенчен вулакансене пыма чĕнеççĕ. Çавнашкалах хаçат-журнал çаракансен тата почтальйонсен конференцине пымала.

ПСК(б)П Хула Комитечĕ.
„ЧĂВАШ КОММУНĔ" хаçат редакцийĕ.
СОЙУЗПИЧЕТ.

Ответлă редактăр замеçтителĕ И. П. ПАВЛАВ—ПИНЕР

Шупашкарти фармацевтсене (ЕМЕЛСЕМ ХАТĔРЛЕМЕ) вĕрентекен шкул

1938—39 вĕренÿ çулĕнче пĕррĕмĕш курса вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК ВИÇĔ ÇУЛ

15 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран хĕрарăмсене тата арçынсене те, вăтам шкулта çичĕ çултан кайа мар вĕренни чухлĕ пĕлÿ илнисене йышăнаççĕ.

Зайавленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшчен йышăнаççĕ.

Зайавленисене шкул директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле (подлинниксем кирлĕ) памала:

1 Хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетелствă.
1. Вĕренни çинчен свидетĕлствă.
3. Государствăн емелдекен учреждевинчен илнĕ ĕнентерÿ, ун çинче вĕренме кĕрекенĕн сывлăхĕ медицинă вăтам шкулне вĕренме кĕме йуракланне кăтартни пулма кирлĕ.
4. Икĕ фотокартăчкă (хăй алпуса çирĕплеттерни).

Кусемсĕр пуçне 16 ç. иртнисем хăйпе пĕрле паспарт илсе килеççĕ.

Испытанине тăма ирĕк панисене хут йарса чĕнеççĕ. Чĕннĕ тăрăх çеç килмелле. Чĕнмесĕр килнисене испытанине кĕртмеççĕ.

Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пыраççĕ.

Шкула кĕрекенсене пурне те математикă тăрăх (арифметикă, алгебрă, геометри), физикă, географи, вырăс чĕлхи тата политграмăтă тăрăх (туллимар вăтам шкул программи чухлĕ) испытани тăваççĕ.

Çичĕ çуллă шкултан тĕп предметсемпе „отлично" тата ыттисемпе (рисовани, черчени, йурласси, музыкă тата физкультурă) „лайăх" паллăран кайа мар паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ, çавнашкалах тата тулли вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене испытани тумаççĕ.

Испытани тытнисене августăн 21-мĕшĕнчен 25-мĕшĕччен вĕренекенсен шутне кĕртеççĕ.

Вĕренекенсене валли общчежити пур, вĕреннине кура стипенди параççĕ.

Занйатисем çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкул адрĕсĕ: гор. Чебоксары, Волгострой, Формацевтическая школа.

ДИРЕКЦИ.

2—1

СĔНТĔРВĂРРИНЧИ ВĂРМАН ĔÇНЕ ВĔРЕНТЕКЕН ТЕХНИКУМ

1938 ВĔРЕНÿ ÇУЛĔНЧЕ КĔРКУННЕ 1-мĕш КУРСА 1939 студентсене илесси çинчен пĕлтерет

Кăçал çак уйрăмсене илеççĕ

вăрман культури ĕçне тата склад ĕçне вĕренме.

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 4 ÇУЛ

15 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран арçынсене тата хĕрарăмсене техникума илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсем, туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен ĕнентерÿ илнисем, ССР Сойузĕн историйĕ тата ССР Сойузĕн Конституцийĕ тăрăх вырăс чĕлхипе тата литературăпа, математикă тата физикă тăрăх (7 çуллă шкул программипе) испытани тытаççĕ.

Туллимар вăтам шкултан тĕп предметсемпе „отлично" вĕренсе тухнисене техникума испытанисĕрех илеççĕ.

Зайавленипе пĕрле çак документсем кирлĕ (подлинниксем):
1) Хăш çулта çурални çинчен, 2) вĕренни çинчен, 3) сывлăх пирки тата шатра касни çинчен, 2) анкетă (пĕр-пĕр учрежденире çирĕплеттермелле). 5) автобиографи, 6) виçĕ фото-картăчкă, 7) 40 пуслăх почтă марки.

Зайавленисене ийунĕн 1-мĕшĕнчен августăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 15—20-мĕшĕнче пулаççĕ.

Занйатисем çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Испытанине пынă чух пĕрле паспарт илсе пымала, унсăрăн испытанине кĕртмеççĕ.

Студентсене валли общчежити пур, выртса тăма тÿшек-сытар параççĕ, столовăй пур, стипенди параççĕ.

Техникумăн хăйĕн: 1) опытлă вĕренмели вăрман дачи, 2) икĕ автомашинă, вĕренмели електростанци, 4) икĕ трактăр, 5) лайăх кабинетсем пур.

Адрĕс: г. Мариинский-Посад, ЧАССР, Набережная улица на реке Волге, дом 12.

ДИРЕКЦИ.

Атăл тăрăхĕнчи вăрман ĕç техникин институчĕ çумĕнчи рабфак

1938—1939 ВĔРЕНÿ ÇУЛĔНЧЕ СТУДЕНТСЕНЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН

ПĔЛТЕРЕТ

Зайавленисем 1-мĕш, II-мĕш тата III-мĕш курссене йышăнаççĕ.

Рабфака вĕренме 18 çултан пуçласа 30 çула çитнисене илеççĕ.

Пĕррĕмĕш курса вăтам шкулта 7 çул, иккĕмĕш курса 8 çул, виççĕмĕш курса 9 çул вĕреннисене илеççĕ.

Зайавленисене çакнашкал документсемпе пĕрле памала:

1. Вĕренни çинчен свидетĕлствă.
2. Хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетĕлствă.
3. Тĕплĕн çырнă автобиографи.
4. Сывлăх йенĕпе тата шатра кастарнине кăтартакан справкă.
5. Виçĕ фото-картăчкă тата ответ пама 40 пуслăх почтă марки.

Асăннă документсене тăратмасан зайавленисене йышăнмаççĕ.

Зайавленине ийунĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ, испытанисем августăн 15-мĕш кунĕнчен пуçланаççĕ.

Пĕррĕмĕш курса кĕрес текенсенчен испытанире çакнашкал предмĕтсем тăрăх ыйтаççĕ: вырăс чĕлхи тата литературă, математикă, географи, Конституци, йестествознани.

Иккĕмĕш курса: математикă, вырăс чĕлхи, тата литературă, йестествознани, физикă, географи тата Конституци.

Виççĕмĕш курса: вырăс чĕлхи тата литературă, математикă, физикă, хими тата нимĕç чĕлхи.

Испытани хăçан пуçланассине уйрăмăн çыpса пĕлтереççĕ. Паспарт испытанине пынă чухне пĕрле илсе пымала.

Рабфакра 3 çул вĕренмеле.

Вĕренме илнисене общчежити, мĕнле вĕреннине кура 61 тенкĕрен пуçласа 75 тенкĕ таран стипенди параççĕ.

Занйатисем çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Зайавленисемпе документсене çак адрĕспе йамала:
Мари АССР гор. Йошкар-Ола, Поволжский лесорабфак — прийомной комисси.

ДИРЕКЦИ.

2—1

Шупашкарти потребкоопераци техникумĕ

1938—1939 ВĔРЕНÿ ÇУЛĔНЧЕ

1-МĔШПЕ 2-мĕш КУРССЕНЕ

Вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Техникум товароведсем, плановиксем тата потребкоопераци çистеми тăрăх бухгалтĕрсем хатĕрлет.

Вĕренме 15 çулхисенчен пуçласа 30 çулхисем таран пур граждансене те илеççĕ.

1-мĕш курса туллимар вăтам шкул пĕтерни чухлĕ йе вăтам шкулта 7-мĕш класра вĕренни чухлĕ пĕлÿ илнисене илеççĕ.

2-мĕш курса вăтам шкул пĕтернисене илеççĕ.

Пур студентсене те стипенди тата выртса тăма, тÿшек, çытар тата ыт. те параççĕ. Техникум çумĕнче; кĕпе çумалли, шăл тÿрлетмелли кабинет, амбулатори, парикмахерски тата столовăй пур.

Зайавленисене августăн 5-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен çак документсене (подлинник) тăратмала:

а) Директăр йачĕпе зайавлени,
б) вĕренни çинчен документ,
в) хăш çулта çурални çинчен свидетĕлствă,
г) икĕ фото-картăчкă, кашнин çине алпусса, пĕр-пĕр учрежденире çирĕплеттермеле;
д) сывлăх пирки справкă.

16 çула йе ытларах çитнисен тĕрĕслÿ испытанине пурте паспарт илсе пымала.

Тĕрĕслÿ испытанине тăратмала тунисене повесткăпа чĕнеççĕ.

1-мĕш курса вĕренме кĕме тĕрĕслÿ испытани августăн 7-мĕшпе 22-мĕш хушшинче ССР Сойузĕн Конституцийĕ, математикă, вырăс чĕлхи тата географи ыйтаççĕ.

Туллимар вăтам шкулта 7-мĕш класра тĕп предметсемпе „отличнă" паллăпа ытти предметсемпе (рисовани, черчени, йурласси, музыкă, физкультурă) „хорошо" паллăран кайа мар илнисене испытанисĕрех илеççĕ.

2-мĕш курса вĕренме кĕрекенсене çакăн пекех вăтам шкулти 10-мĕш клас программи тăрăх испытани ыйтаççĕ.

Шкултан тĕп предметсемпе „отличнă" ыттисемпе „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Вĕренме çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

Испытанисĕрех илнисене вĕренме уйрăм повесткăпа чĕнеççĕ.

Техникум адрĕсĕ: Гор. Чебоксары, ЧАССР, улица Карла Маркса, 80.

ДИРЕКЦИ.

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 295

Гор. Чебоксары, Типографии № 1 Чувашполиграфтрест. Закза № 580.